# Йышлă çемье валли хĕрарăм 15 литр кĕрекен кастрюльпе апат пĕçерет

• 2 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш хĕрарăмĕ

12 (830) №, 2014, пуш, 29

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

Ирĕксĕрлесе сиплени кăна çак чире сарăлма памĕ. Кăкăр шыççи аптратсан... **3 стр.**

Шупашкар районĕнчи Чурачăксем ăмăртсах хаçат çырăнчĕç. **4 стр.**

Пирĕн журналист Турцире иртнĕ Тĕрĕк пухăвне хутшăннă. **5 стр.**

Сысна ами йышлă çăвăрласси мĕнрен килет? **8 стр.**

Саккунлă еркĕн. Лайăх хуняма. **9 стр.**

Ăна малалла талпăнма... самурай кăмăлĕ пулăшать. **11 стр.**




М.ТУМАЛАНОВА сăн ÿкерчĕкĕ.

# Ĕлĕкхи юрăсем манăçмаççĕ

**Майра Вери**

«Çĕрле вăранса кайсан та ĕлĕкхи юрăсем ăша кĕреççĕ. Сăмахĕсем манăçман-ши тесе юрласа та пăхатăп...» – калаçăва пуçларĕ Çĕрпÿ районĕнчи Патăрьелте тĕпленнĕ Вера Ермакова. Çук, ăстăнра çырăнса юлнă йĕркесем асран тухман. «Каçхине çи-пуçа улăштарса тăхăнаттăмăр та çерем çине тухса чупаттăмăр, карталанса юрă шăрантараттăмăр. Çити-çитми пурнăçшăн кулянса ларман», – ăнлантарать 78 çулти хĕрарăм. Юрă та кăмăла пусарма пулăшнă ĕнтĕ. «Анне хурлăхлине пуçласан унпа пĕрле йĕреттĕм», – палăртать вăл. Йăх-несĕлĕн кун-çулне сăнлакан çак пуянлăх ăруран ăрăва куçса пырать. Вера Сергеевнăн ачисем те юрра-ташша ăста.

«...Анне мана çуратсанах
Шурă тутăрпа чĕркенĕ пуль,
Ырă кур, хĕрĕм, ай, тенĕ пуль,
Телейлĕ пул, хĕрĕм, ай, тенĕ пуль...» –шухăшлавра аваллăха илсе кайрĕ Вера Ермакова. Ашшĕсĕр çитĕнекен тĕпренчĕксен пурнăçĕ пушшех çăмăл пулман. Яштака кĕлеткеллĕ хĕр кунĕнçĕрĕн ĕçлени, ал ĕç туни куç умне тухса тăчĕ.

***Кашкăр пулăшсан ўпре те тĕвене ўкернĕ тет.***

**Каларăш.**




| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 29.03 | – 2 | – 6 |
| 30.03 | – 3 | – 4 |
| 31.03 | 0 | – 5 |
| 01.04 | + 1 | – 6 |
| 02.04 | + 2 | – 5 |
| 03.04 | + 3 | 0 |
| 04.04 | + 6 | – 2 |

Рита АРТИ сăн ўкерчĕкĕ.

**Пĕлтĕрхи хакпа çырăнса юлăр!**
**“Чăваш хĕрарăмне” 2014 çулăн II çурринче /июль-декабрь/ илсе тăмашкăн пуш /март/ уйăхĕн 31-мĕшĕччен кăна малтанхи хакпа – 243,18 тенкĕпе – çырăнтараççĕ.**
**Апрельтен хак ўсет – 340,44 тенкĕпе танлашать.**



ПУЛТАРУЛĂХ

# Ĕлĕкхи юрăсем манăçмаççĕ

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Вера Сергеевна К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх драма театрĕнче реквизиторта нумай çул ĕçленĕ. Артистсемпе пĕрле гастроле кайсан çул тăршшĕпе юрă шăрантарнă. «Майра Вери», – ялан хитре çӳрекен хĕрарăм çумне çакнашкал ят çыпăçнă. Çакăншăн пĕрре те кӳренмен вăл.

Патăрьелсем ĕлĕкхи юрăсене манăça кăларасшăн мар. Ахальтен мар Вера Ермаковăна шкулти, клубри уявсене ятарласа чĕнеççĕ. Вăл калаçу йĕркелеме ăста. Юрласа кăтартнă хыççăн тупмалли юмахсемпе те çамрăксен кăмăлне çавăрма пултарать.

## Автобуспа та, лашапа та

«Кăçал хĕл каçнине те сисмерĕмĕр», – теççĕ Çĕрпӳ районĕнчи Патăрьел ялĕнчи «Тевет» ушкăн хĕрарăмĕсем. Вĕсем хăйсен репертуарне çĕнетсех тăраççĕ. Тухса çӳремешкĕн транспорт çукки те чăрмав мар выранти сцена ăстисемшĕн. Уçă саслăскерсем 206-мĕш автобуспа ăçта кăна çитсе килмен-ши? «Юрласа пырсан укçа илместĕп», – водитель çапла каланине хăнăхнă вĕсем. Çавăнпа транспорта кĕрсенех концерт пуçламашкăн килтенех хатĕрленсе тухаççĕ. Чăн та, çапла майпа кирлĕ вырăна тӳлевсĕрех çитет «Тевет» ушкăн. Вĕсене ытараймасăр автобусран тухакан пĕтĕм халăх киле каяс вырăнне клуба кĕрсе юлать. Çапах хăй вăхăтĕнче лашапа та, мотоциклпа та çула тухнă сцена ăстисем. Концертран юлас мар тесе вĕсем мотоблок тапратса тухма та хатĕр.

«Сцена çине кашни кун тухсан та зала куракансем пуçтарăнаççĕ пулĕ», – теççĕ хĕрарăмсем. Чĕрĕ сасăпа юрланишĕн кăмăллать вĕсене ялйыш.

«Тевет» ушкăн республикăри, районти фестивальсене хутшăнать. Нумаях пулмасть Кĕçĕн Тивĕшри Марфа Тимофеевăна 100 çулти юбилейпе саламланине аса илчĕç вĕсем. Уява пуçтарăннă хăнасем вĕсене çĕрĕпех юрлаттарнă.

## Тĕрĕллĕ-эрешлĕ япаласем

«Çын умĕнче хитре курăнас килет», – пĕр саслăн ăнлантараççĕ юрă-ташă ăстисем. Çĕнĕ çипуç çĕлетме укçа шеллемеççĕ хĕрарăмсем. Ăна тĕрĕ-эрешпе капăрлатаççĕ. Нумаях пулмасть «Тевет» ушкăн хастарĕсем çекĕлпе шăрçа çыхма пуçланă. Тĕрлĕ тĕслĕ çипрен ăсталанăскер куçа туртать. Унăн хăйне евĕрлĕхе кирек кам та тӳрех асăрхĕ. Кăкăр умĕ те ыттисенчен уйрăлса тăрать вĕсен. Ăна уçса хупмалла тунă. Çавăнпах вăл ачана кăкăр çитерме те чăрмантармасть.

Мĕн кăна çыхман-ши вĕсем? Темĕн тĕрлĕ тутăр, тапăчки, чăлха-нуски хатĕрлесе тултарнă.

Пир станĕ те пушă лармасть. Унпа урай сарми, пиçиххи, тĕрлĕ эреш тĕртеççĕ. Ĕлĕкхи çав япалапа ӳкерчĕк тума та вĕреннĕ. Вăл кирек хăш пӳлĕме хăтлăх кĕртĕ. Çак ĕçе шкул ачисене те явăçтараççĕ. Вĕсем хăйсен вĕрентекенĕнчен Римма Беловăран юласшăн мар.

Пĕлтĕр Кĕр сăри уявне тĕплĕ хатĕрленнĕ Патăрьелсем. Римма Евстафьевна кĕлĕ сăмахĕсене вĕреннĕ. Уяв саманчĕсене хавхаланса аса илчĕç вĕсем. Кăçал Хĕр сăри йĕркелеме палăртнă. Ăна та йăла-йĕркене пăхăнса паллă тăвĕç.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

ÇЕМЬЕ

# Чун ăшши пурин валли те çитет

**Патăрьел районĕнчи Чăваш Ишекре пурăнакан Каролина Уткина йышлă çемьере çуралса ӳснĕ май кил-çурт ача-пăчапа кăна илемлĕ те пуян, тулли пулнине лайăх ăнланать. Шкулта вĕрентекенре ĕçленĕ май ир тухса кайса каç енне çеç киле çитекенĕн, тĕрĕссипе, пачах та кичемленсе ларма вăхăчĕ çук. Çапах та икĕ хĕрĕпе пĕр ывăлĕ çитĕнсе килтен тухса кайнине кура мăшăрĕпе иккĕшĕ хăйсен хӳттине ачасем илме тĕв тытнă.**

Çемье çулталăкĕ пулнă май 2007 çулта Шупашкарти тата Канашри ача çурчĕсенчен икĕ тăлăха илсе килнĕ. Пурăна киле тата Коля Тельманăн шăллĕ Андрей тупăннă. Пĕр тăвансене пĕр-пĕринчен уйăрма юраманнине кура ăна та йышăнма шухăшланă. Иртнĕ çулла Уткинсем Çĕмĕрлери ача çуртĕнчен 5 ачана канма илсе килеççĕ. Шăпăрлансене çав тери килĕшет ку çемьере. Вăрмана çырлана çӳреççĕ, шыва кĕреççĕ, пулă тытаççĕ... Ялта лайăх каннă хыççăн каялла пĕри те таврăнасшăн марри сисĕнет. Кусĕсенчен куççуль тухманни кăна. Каролина Анатольевнăпа Анатолий Арсентьевич хĕрхенеççĕ тăлăхсене. Паллах, пурне те килте хăварма пултараймаççĕ, пĕрин валли вырăн çитеймест. Пĕр çемьери Алеша, Никита, Роман Исаевсем тата Хĕрлĕ Чутай тăрăхĕнчи Денис Хораськин кунта хӳтлĕх тупнишĕн тем пекех хĕпĕртеççĕ. Етĕрнере пĕр тăвансен ватă кукамăшĕ пурăнать. Мăнукĕн ачисемшĕн тунсăхлакан 97 çулти кинеми инçе çул тесе аптраса тăмасть, такси тытса çулталăкра темиçе хутчен те Чăваш Ишеке вĕçтерсе çитет. Шăпăрлансем валли сумки-сумкипе кучченеç, пылак çимĕç илсе килет. Ахаль куна уява çавăрать кинеми. Мăнукĕсемшĕн савăнать, вĕсемшĕн пурăнать кĕçех 100 çула çывхараканскер. Çулĕсене кура мар хаçат-журналпа кĕнеке халĕ те куçлăхсăрах вулать вăл.

Каролина Анатольевнăпа Анатолий Арсентьевича хисеплесе пĕрремĕш кунранах «атте», «анне» тесе чĕнеççĕ арçын ачасем.

## Пĕтĕмпех михĕпе

Йышлă çемье валли йăлтах михĕпе, курупкасемпе туянаççĕ Уткинсем. Ӳсекен ачасем валли апатçимĕç нумай кирлĕ. 15 литр кĕрекен кастрюльпе пĕçернĕ апат пурин валли те çитет. Пĕчĕк çатма-чӳлмек пирки тахçанах маннă ку çемьере, вĕсене пуçтарсах хунă. Çуллахи вăхăтра банки-банкипе хăяр-помидор, тĕрлĕ салат, улма-çырла компочĕ хупаççĕ. Пĕрисем пахча çимĕç çăваççĕ, теприсем тураççĕ, вакласçĕ... Туслăн ĕçлесе нӳхрепе хăвăртах тăварланă, маринадланă пахча çимĕçпе тултарса лартаççĕ. Хĕл хырăмĕ аслă, çавна май çырлакăмпа нумай пуçтараççĕ. Килте хатĕрлени лавккара туяннинчен темиçе хут пахарах та тутлăрах-çке.

## «Начаррине вĕрентместпĕр»

Уткинсен çемйинче черетпе дежурство тăраççĕ. Явапли çав кун тусан сăтăрать, савăт-сапа çăвать, çĕр улми шуратать. Мĕн пур ĕçе вăхăтра тума хăнăхнă ачасем. Кутăнлашса, тавлашса тăракан çук. Кашни хăйĕн ĕçне лайăх пĕлет. Компьютер умне черетпе лараççĕ. Выльăхчĕрлĕх пăхма та пулăшаççĕ. Çулла утă пуçтараççĕ, таварăççĕ. Коля ĕне сума та пĕлет. Вăл çемьере чи асли тата чи тирпейли. Ăна пурте итлеççĕ, хисеплеççĕ. Шкул хыççăн фельдшера вĕренме каяс шухăш-ĕмĕтлĕ 17 çулти каччă. Шăллĕ Андрей пĕчĕккĕллех выльăх-чĕрлĕх патне туртăнать. Ĕне пĕтĕленнипе пĕтĕленменни тата хăçан пăруласси те кăсăклăуншăн. Пăрусемпе путексене уйрăмах юратать. Шкултан çитсен никам хушмасăрăх картишне выльăх-чĕрлĕх пăхма тухать. «Ĕçлесе çăкăр çиме хăнăхчăр. Усала вĕрентместпĕр-çке. Пур çĕре те явăçтарма тăрăшатпăр, кайран çын умĕнче намăс курмалла ан пултăр. Ачасене ĕç урлă кăна тивĕçлĕ воспитани пама пулать», – тет Каролина Анатольевна. Арçын ачасем спортпа туслă. Пурне те кăçал вĕр çĕнĕ йĕлтĕр туянса панă. Тепĕр ача та усрава илес шухăшлă Уткинсем. Анчах та уроксем тумашкăн малтан уйрăм пӳлĕм тăвасшăн.

## Палăк лартăттăм

«Çемье пысăкран ĕç те нумай. Вырсарни кун алăран йĕппе çип каймасть. Пĕрин трико çĕвви каять, теприн кĕпи çĕтĕлет. Килте пĕр хĕрарăм кăна пулсан та йăлтах ĕлкĕретĕп, ирхине çынсемпе тан тăратăп. Мăшăр нумай пулăшать», – тет Каролина Анатольевна.

Хуçалăхĕ пĕчĕках мар, виçĕ ĕне, картиш тулли сурăхсемпе пăрусем, чăх-чĕп тытаççĕ Уткинсем. Амăшĕ шкултан киле часах çитеймен чухне çĕр улми, сухан-кишĕр шуратса хурса ĕçе чылай çăмăллатаççĕ ачисем.

Вĕлле хурчĕ тытаççĕ Уткинсем. Çуллахи вăхăтра ашшĕпе пĕрле хурт та уйăраççĕ, пыл та юхтараççĕ шăпăрлансем.

«Япала çумалли автомат машина шухăшласа кăларакана палăк лартса парăттăм. Ырлăхран та ырлăх, хĕрарăм ĕçне епле çăмăллатать. Пире, çичĕ ачана, анне епле çитĕнтернĕши, çутă та, газ та пулман ун чухне», – тĕлĕнсе калаçать Каролина Анатольевна.

## Тăван килти пек

Каролина Анатольевна малтан Чăваш Ишекри шкулта ĕçленĕ. 2003 çултанпа Ыхраçырминчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта вырăс чĕлхипе литератури вĕрентет. Чи малтанах ют ял учителĕсемпе пĕр чĕлхе тупассăн туйăнман, халĕ вара асăннă шкул педагогшăн тăван кил вырăнĕнчех. Килĕшет ăна кунта. Эпĕ килнĕ вăхăтра шăпах «ППЭне хатĕр-и?» уçă урока хатĕрленетчĕ. Ĕç стажĕ 35 çул унăн. Вăл хăйĕн предметне питĕ юратать. Вырăс чĕлхипе литературине таранăн вĕрентнисĕр, ачасене тивĕçлĕ воспитани панисĕр пуçне, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи, ăна манма юраманни, çĕр-шыври, тĕнчери ларутăру пирки те кашни урокрах çамрăк ăрăва ăнлантарма тăрăшать.

Хăй ĕçне чунтан парăннă вĕрентекене шкул ачисем, учительсем чунран хисеплеççĕ.

## Ăшă çунат айĕнче

Пĕрисене тăван тĕпренчĕкĕ те кирлĕ мар пулсассăн теприсемшĕн ют çын ачи те ытлашши мар. «Кашниех çĕр çине телей курма çуралать. Ашшĕ-амăшĕшĕн ачи айăплă мар. Хăйсене килти пек туйса ӳсчĕр. Çемьере çитĕннине нимĕн те çитмест, унпа нимĕн те танлашаймасть», – теççĕ Уткинсем. Вĕсем ачасен малашлăхĕпе пуласлăхĕшĕн те пăшăрханаççĕ. Пиллĕкĕшне хватер черетне тăратма та ĕлкĕрнĕ. Тепĕр иккĕшĕн çулĕсем çитейменха. Арçын ачасене ӳссен çак килçуртранах салтака ăсатас шухăшлă. Вăхăт çитсен туй та кĕрлеттерĕç-ха. Çиччĕшĕ те хăйсен ачи вырăнĕнчех. Вĕсемсĕр пурăнма та пултараймаççĕ, çуллахи вăхăтра лагере канма кайсан та тунсăхласа çитеççĕ Уткинсем.

Анатолий Арсентьевичпа Каролина Анатольевнăн икĕ хĕрĕпе ывăлĕ Шупашкарта пурăнаççĕ. Чи асли Татьяна мăшăрлă, суд приставĕнче тăрăшать. Наташа кĕçех качча тухса çемьелле пулĕ. Алеша И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУри физвоспитани факультетĕнче вĕренет.

**Елена АТАМАНОВА.**

## Тӳрĕ калаçу ыйтăвĕ: «Почта тата çыхăну»

Почта ĕçĕ сире тивĕçтерет-и? Хаçат-журнал хакĕсем мĕншĕн ӳсеççĕ? «Хыпар» хаçатпа унăн ытти кăларăмĕ сирĕн килĕре вăхăтра çитет-и? Почтальон ят-сумĕ мĕншĕн чакать? Çак тата ытти ыйтăва, хисеплĕ вулаканăмăрсем, 2014 çулхи ака уйăхĕн 3-мĕшĕнче, кĕçнерни кун, **«Хыпар» хаçат редакцийĕнче Раççей Почтин Чăваш Енри управленийĕн директорĕ Владимир Георгиевич Тимофеев хуравлать.**

Сирĕн ыйтăвăрсене çак адреспа кĕтетпĕр: 428019, Шупашкар, И.Яковлев пр., 13, III хут, «Хыпар» Издательство çурчĕ. Телефонпа çак номерсемпе ыйту пама пултаратăр: /8352/ 56-00-67, 56-33-64, 56-04-17, 62-08-62, e-mail: hypar1@mail.ru

**2014 çулăн II çурри валли «Хыпар» тата «Хыпаршăмат кун» хаçатсене пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен çеç иртнĕ çулхи хаксемпе çырăнтараççĕ. Васкăр, «Хыпарлă» пулăр!**

**СДАЕМ В АРЕНДУ**

АУ "Издательский дом "Хыпар" предоставляет в аренду помещения на 6 и 7 этажах здания редакционно-издательского корпуса, расположенного по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. И.Яковлева, д. 13, для использования под офис.

Со всеми вопросами обращаться в 616 каб. или звонить по тел. 8-967-478-06-12, 56-00-67.



САМАХ ПАРĂР-ХА

# Ирĕксĕрлесе сиплесен чир сарăлмĕ

Марина ТУМАЛАНОВА

Çынсем урамра ури айнех сурса утнинчен тĕлĕнме пăрахаймастăп. Çапла майпа тавралăх вараланать çеç мар, чир-чĕр те хăвăртах сарăлать. Анчах вĕсенчен нихăшне те пăшăрхантармасть çакă. Ахальтен мар пирĕн тăрăхра туберкулезпа чирлекен йышлă. Çак амакпа нушаланакансем çын тулли транспортра ÿсĕрсе пырассĕ. Пĕлĕшсене алă тытса сывлăх сунни те – карта кĕмен пулăм.

Туберкулезпа чирлекенсенчен чылайăшĕ эрех-сăра авăрне лекнĕ. Кампа хутшăнасси, пĕр сĕтел хушшине ларасси, выртса çывăрасси пĕлтерĕшлех мар вĕсемшĕн. Виçĕ пĕр тăвана пĕлеттĕм. Хулари 3 пÿлĕмлĕ хваттерте ашкăнса пурăнчĕç. Хăна пуçтарса кунĕн-çĕрĕн ĕçетчĕç, çапăçатчĕç, килĕнче ялан юрă-кĕвĕ янăратчĕ. Юлашкинчен полици сăмахне те хăлхана чикми пулчĕç. Вĕсенчен асли çамрăклах туберкулезпа чирлесе вилчĕ. Вăталăх ывăл темиçе хутчен тĕрмене çакланчĕ. Кĕçĕннин качча тухмасăрах кун-çулĕ татăлчĕ. Мухмăр шар кăтартрĕ ăна. Çакăн хыççăн тăванĕсем хваттере сутрĕç те тинех шăвшав лăпланчĕ. Çапах çакănта хăналаннă нумай çамрăк туберкулез серепине лекни иккĕлентермест.

Çулсерен Чăваш Республикинче «Шурă салтак тÿми» уйăхлăх йĕркелесси йăлара. Кăçал та пушăн 20-мĕшĕнчен пуçласа ака уйăхĕн 20-мĕшĕччен тăсăлать вăл. Çак вăхăтра сывлăх учрежденийĕсенче уçă алăк кунĕсем йĕркелеççĕ. Ун чухне кашниех флюорографи тĕрĕслевĕ витĕр тухма май пур. Фтизиатрсемпе калаçу йĕркелеме пулĕ, вĕсем кирек хăш ыйту хуравне тупма, лару-тăрăва уçăмлатма пулăшĕç.

И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕн студенчĕсем, сăмахран, çак мероприятие хастар хутшăнаççĕ. 3 кунра 500 ытла çамрăк хăйĕн сывлăхне тĕрĕслеме ĕлкĕрнĕ. Флюорографи кусса çÿрекен оборудованийĕ пĕр çĕртен тепĕр çĕре вырăна çитĕ. Çавăнпах паян тумалли ĕçе ырана хăвармалла мар.

Туберкулезпа чирлĕ çын хăйĕн çине алă сулнă тĕслĕх сахал мар. Анчах çакă ыттисен малашлăхне усал витĕм кÿме пултарать. Апла тăк ăна ирĕксĕрлесе сиплеме тивет. Çакă та çĕнĕлĕх мар. Уйăхлăх вăхăтĕнче йĕрке хуралçисемпе сывлăх сыхлавçисем шăпах çак ыйтăва та пăхса тухма палăртнă.

Юлашки çулсенче республика больницисене çĕнĕ оборудованипе тивĕçтерни çинчен нумай калаçатпăр, çыратпăр. Çакă, паллах, туберкулезпа чирлĕ çынна хăвăртах тупса шута илме пулăшать.

Шурă халатлисен курăмлă ĕçне палăртмасăр иртеймĕн. Пĕлтĕр вĕсем республикăри халăхăн 66,8 процентне флюорографи тĕрĕслевĕ витĕр кăларнă. 2013 çулта пирĕн тăрăхра туберкулезпа аптăракансен йышĕ 9,8 процент чакнă. Статистика тăрăх – 100 пин çын пуçне 58,6-шĕ чирлĕ. Çак амакпа нушаланса вилекенсен йышĕ пĕчĕкленнĕ. Пур пĕрех лару-тăру палăрмаллах улшăннă тееймĕн. Пĕтĕм тĕнчери сывлăх сыхлав организацийĕ çирĕплетнĕ тăрăх – Раççейре чир-чĕр çаплипех эпидеми шайĕнче алхасать.

Сывлăха вăхăтра тĕрĕслемеллине кашнинех ăша хывмалла. Çакă пĕр тăхтамасăр сиплев пуçлама, чире çĕнтерме май парĕ. Унсăр пуçне сывă пурнăç йĕркине пăхăнмалли, пахалăхлă апат çимелли çинчен те манмалла мар.

Çак кунсенче Раççей Сывлăх сыхлав министерствинче те туберкулез хăрушлăхĕ пирки калаçнă. Унта чир XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи кризиса пула вăй илнине палăртнă. 2014 çулта 19 регион валли туберкулезпа кĕрешмешкĕн федераци хысниччен 1,1 миллиард тенкĕ уйăрĕç. Унсăр пуçне малашне халăх пекех пур регионa та эмелпе тивĕçтерме ытларах укçа пăхса хăварĕç. Çак тĕллеве пурнăçа кĕртмешкĕн çулталăкне 3,5 миллиард тенкĕ кирлĕ пулĕ.

Сиплев тытăмне мĕнле çĕнĕлĕх кĕртнине те пĕлес килет. Юлашки çулсенче хăватлăрах эмел кăларма пуçланине асăнса хăвармалла. Вăл чире хăвăртрах çĕнтерме пулăшать. Халĕ, тĕслĕхрен, туберкулезпа нушаланакансен 6 уйăхран пуçласа 2 çул таранччен сиплеме тивет. Ăсчахсем çĕнĕ йышши препаратсем шухăшласа тупас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Мускаври конференцире вĕсен малтанхи çитĕнĕвĕсем çинчен те сăмах хускатнă. Пĕлтĕр Пĕтĕм тĕнчери сывлăх сыхлав организацийĕ 45 çул хушшинче пĕрремĕш хут туберкулезран хăтăлмалли çĕнĕ эмеле ырланă. Ăна хальлĕхе ют çĕр-шывран илсе килеççĕ, витĕмлĕ çавнашкал препарата малашне Раççейре те кăларма пуçлĕç.

ПУÇАРУ

# Пурнăçшăн... шăла çыртса

**Раççейре кашни кунах 47 хĕрарăм кăкăр шыççипе вилет. Республикăра çулталăк пуçламăшĕ тĕлне усал шыçăллă 22 пин ытла çынна шута илнĕ, вĕсенчен 60% – хĕрарăмсем. Иртнĕ ытлари кун Республикăри онкологи диспансерĕнче çак чирпе аптăракан хĕрарăмсене пулăшмалли центр уçăлчĕ. Вăл Шупашкарти Гладков урамĕнчи 31-мĕш çурта /223-мĕш пулĕм/ вырнаçнă.**



Этемлĕхĕн черчен пайĕ пурнăçри йывăрлăхсене чĕре çывăхне йышăнма хăнăхнă, арçынран ытларах пăшăрханать вăл. Çавна пула та усал шыçă аталаннине наука çирĕплетнĕ ĕнтĕ. Анчах ку диагноз «вилĕм» тенине пĕлтермест. Шел те, чирлисенчен чылайăшĕ усал шыççа çакăн евĕр хаклать, кулянса хăйне татах та сиен кÿрет. Хальхи медицинăн мура çĕнтермелли тĕрлĕ меслет пур. Вĕсенчен пĕри – кĕлеткери тата чунри мĕн пур вăй-халтан чирпе кĕрешесси. Шăпах çак ĕçе пурнăçламашкăн тĕллев лартнă та центрта. Çавăн пекех унта специалистсем чирлĕ çынсен тăванĕсене те психологи пулăшăвĕ парĕç. Центр чиновниксем хистенипе мар, республикăри Хĕрарăмсен канашĕн пуçарăвĕпе уçăлчĕ. «Пурнăçшăн» проект ЧР Экономика министерствин грантне, 300 пин тенке яхăн, выляса илнĕ. Çĕнĕлĕхе пурнăçа кĕртмешкĕн «Ырă ĕç» волонтер организацийĕ, онкологсемпе психологсем хутшăннă.

– Ку чир пирки илтнĕ тăрăх кăна пĕлместĕп ĕнтĕ. Чирлисен пурнăçне çăмăллатас килчĕ, медицинăпа психологи пулăшăвне туйса тăччăр тесе тĕллев лартрăмăр, – палăртрĕ республикăри Хĕрарăмсен канашĕн ертÿçи Ольга Зайцева.

ЧР сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова центра кирлĕ хатĕрсемпе тивĕçтерме шантарчĕ. «Ятарлă литература, пултарулăха ирĕке ярса ĕçлеме сăрăсем, мольберт, фотоаппарат тата ытти те пулĕç кунта. Çын кăмăлне çĕклеме культура ĕçченĕсем килсе çÿрĕç. Пĕр сăмахпа пурнăç вĕресе тăрĕ, кашнин кăмăлне тупма тăрăшĕç», – терĕ вăл.

Тутарстанри «Пурăнмашкăн пĕр тан праваллă» коммерциллĕ мар пĕрлĕхĕн директорĕн çумĕ Эдуард Нагуманов палăртнă тăрăх – ку проект пациентсемшĕн кăна мар, тухтăрсемшĕн те питĕ пĕлтерĕшлĕ. «Çакăн евĕр меслетпе Европа çĕр-шывĕсенчи чылай онкологи клиникинче ĕçлеççĕ. Сирĕн регионта пурăнакансемшĕн эпĕ питĕ савăнатăп, мĕншĕн тесен федерацин Атăлçи округĕнче кăна мар, Раççейре те çакăн пек пĕрлĕхлĕ проект халĕччен пулман. Медицинăпа общественноç тата патшалăх пĕрле тăрăшнипе кăткăс чылай ыйтăва татса пама пулатех», – терĕ Эдуард Вильданович.

Республикăри онкодиспансерăн тĕп тухтăрĕ Игорь Долгов пĕлтернĕ тăрăх – центр икĕ сменăпа ĕçлĕ, унта пурне те хапăлласа кĕтсе илĕç. Регистратурăн 56-11-12 телефонĕпе те çырăнма пулать.

Онкодиспансерăн 223-мĕш пÿлĕмне Шупашкарти «Радуга» культурăпа курав центрĕ 49 сăн ÿкерчĕк парнеленĕ. Вĕсене республикăра пурăнакан ахаль çынсем ÿкернĕ. Тăван тăрăхăн кашни кĕтесĕнче çут çанталăк илемне асăрхама пĕлекенскерсен ĕçĕсем кирек камăн кăмăлне те хăпартĕç. Асăнмалла, сăн ÿкерчĕксен конкурсне те республикăри Хĕрарăмсен канашĕпе пĕрле ирттернĕ.

Ольга Зайцева, хăй усал шыçăпа куçа-куçăн тĕл пулнăскер, чирлисене пурнăçа юратма, уншăн шăла çыртса кĕрешме чĕнет. «Çакăн хыççăн пурнăç çине йăлтах урăхла пăхатăн, хаклатăн. Чи кирли – çын çĕр çине мĕн тĕллевпе килнине ăнланса илесси. Инкекре пĕччен тăвăнса лармалла мар кăна. Çын хушшинче пулма тăрăшмалла, калаçмалла, ĕçлемелле...» – терĕ вăл журналистсемпе чуна уçса калаçнă май.

Алина ИЗМАН.

КИРЕВСĔРЛĔХ

# «Хаклă» шÿт

Çĕнĕ Шупашкарти 23-ри каччă хулари шалти ĕçсен органне ÿсĕрле лекнĕ. Йĕрке хуралçисем ун тĕлĕшпе адмпротокол çырнă вăхăтра вăл кĕсье телефонĕпе РФ ШĔМĕн Шупашкарти управленине шăнкăравланă. Оперативлă дежурнăя Çĕнĕ Шупашкарти Комсомольски урамĕнчи çуртра сирпĕнекен япала вырнаçтарни, унта терроpла ĕç тума хатĕрленни пирки пĕлтернĕ. Ултава пула халăха пăлхатма, экстремаллă лару-тăрура пулăшу паракан право хуралĕн службине кăлăхах чăрмантарма тивнĕ. Шÿт мĕн хака кайса ларассине суеçĕ-каччă йăлтах ăнланнă-ха. Шел, кая юлса. Вăл хăйĕн айăпне йышăннă.

Уголовлă ĕçе уйрăм йĕркепе пăхса тухнă. Суд яша çулталăк ĕçлесе юсанма, шалăвăн 10% патшалăха тÿлеме йышăннă. Приговор вăя кĕмен-ха.

Лиана ВАНИНА.

КУЛЬТУРА ÇУЛТАЛĂКĔ

# Актер ячĕпе – бюст




1959 çулта Чăваш музыкăпа драма театрне пуçарса яраканĕсенчен пĕри, сцена çинче 50-а яхăн роль калăпланă актер, режиссер Борис Марков пурăннă пулсан пуш уйăхĕн пуçламăшĕнче 90 çул тултаратчĕ. Хисеплĕ чылай ят-сума тивĕçнĕскере культурăпа искусство çыннисем, музыкăпа театра юратакансем кăна мар, ентешĕсем те манмаççĕ.

РСФСР тата Чăваш АССР халăх артисчĕ, «Хисеп палли» ордена тата нумай медале тивĕçнĕскер Элĕк районĕнчи Хитекушкăнь ялĕнче çуралса ÿснĕ, Тавăт шкулĕнче вĕреннĕ. Борис Семенович Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă. Ку тăрăхра пурăнакансем мухтавлă ентешне асра тытаççĕ. Вăл вĕреннĕ шкул халĕ Борис Марков ячĕпе хисепленет. Çак кунсенче унта савăнăçлă лару-тăрура Борис Семеновичăн бюстне вырнаçтарчĕç. Актерăн шăллĕ Анатолий Марков, сума суса килнĕ хăнасем ăшă чылай сăмах каларĕç, вĕренекенсене ăнăçу сунчĕç. Юлашкинчен шкулăн пултарулăх ушкăнĕ пуханнисене юрă-кĕвĕпе савăнтарчĕ.

Геннадий САВЕЛЬЕВ.

ÇЫРĂНТАРУ-2014

# Хаçатсăр пурăнасшăн мар

«Почтальонпа пĕр кун» акцие малалла тăсса Шупашкар районĕнчи Чурачăк почта уйрăмне çула тухрăмăр. Яла Шупашкартан маршрутка çÿрет-ха, анчах палăртнă рейсран 5 минут юлнă иккен, теприне 2 сехете яхăн кĕтмеллеччĕ. «Çак вăхăтра миçе экземпляр хаçат çырăнтарма пулать?» – тесе шухăшласа Ишлее каякан ГАЗеле йăпăр-япăр кĕрсе вырнаçрăм. Салара такси чупать – кирлĕ çĕре çавăнпа çитме тĕв турăм. Ан тив, «Чăваш хĕрарăмĕн» корреспонденчĕсене таксипе çÿремелĕх те шалу тÿлеççĕ тесе тĕлĕнтĕр ял халăхĕ. Почта уйрăмне туххăмрах вĕçтерсе çитрĕм. Шурă Аудирен тухнине курсан Нина Аметина почтальонка, чăнах та, тĕлĕнчĕ пулас...

Ялти почта уйрăмĕ 1964 çулта хута кайнă. Паянхи кунччен ларать авă. Кунта ĕлĕкхиллех вутă хутса ăшăнаççĕ. Ку тивĕçе почта уйрăмĕн пуçлăхĕ Надежда Викторова пурнăçлать. Çурчĕ кивĕ, пĕчĕк пулин те почта ĕçченĕсем плана пур енĕпе иртттерсе пурнăçлаççĕ, Мутикасси, Чармак, Курак Чурачăк, Вуспÿрт Чурачăк, Çĕньял Чурачăк, Кивьял Чурачăк ялĕсене пичет кăларăмĕсемпе тивĕçтереççĕ.

Пĕрле чиксе тухнă резина чечекĕ атта улăштарса тăхăнтăм та почтальонкăпа пĕрле ферма еннелле утрăмăр. Машинăпа трактор паркĕпе иртнĕ май механизаторсемпе калаçрăм. «Эсир хаçат вулама юрататăр-и?» – ыйтрăм уй-хире тухма техника хатĕрлекенсенчен. «Паллах!» – пĕлтерчĕç арçынсем харăссăн. Юратнă кăларăмсенчен чи малтан «Чăваш хĕрарăмне» асăнсан, пытармастăп, питĕ савăнтăм. Çитес çур çулта илсе тăмашкăн та çырăнма ĕлкĕрнĕ иккен. Ĕне ферминче ĕç вĕрет, çынсене чăрмантарма та аван мар-ха та... Дояркăсем ирхи сăвăм хыççăн пушаннăччĕ ĕнтĕ. Роза Маркитанова пирĕн хаçатпа 10 çул ытла туслине пĕлтерчĕ. Мишкинсем, Карнковсем фермăра çемйипех тăрăшаççĕ. Килте выльăх-чĕрлĕх чылай тытакансксерсем вулама вăхăт тупаççех. Арман авăртакан Маргарита Георгиевна «Хыпар» Издательство çурчĕн чылай хаçатне кăмăллать. 2004 çулта вăл «Чăваш хĕрарăмĕ» йĕркеленĕ лотерея вылявĕнче ама сысна çурине те тивĕçнĕ. «Ăна юлташ пултăр тесе Ишек пасарĕнчен тепре туянтăмăр, питĕ лайăх ÿсрĕç. Пурăна киле пирĕн ама пĕтĕленнине пĕлтĕмĕр. 8 çура çăвăрларĕ. Пурĕ 3 хутчен чуптартăмăр, юлашкинчен 16 çура пачĕ. Вĕсене сутса каллех хаçат çырăнтăмăр. Ÿлĕмрен те лотерейăна хутшăнса выляса илесчĕ-ха...» – аса илчĕ хĕрарăм хаçат çырăннă май. Пăрусем пăхакан Елена Карикова вара савăт-сапа тавраше выляса илнĕ-мĕн, хатĕр-хĕтĕрпе паян та усă курать. Чурачăкри шкулта ĕçлекенсем «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçат йĕркеленĕ «Хăв çырăн та – юлташна çырăнтар» акцие хутшăнса пĕррехинче пирĕн хаçатпа коллективĕпех туслашнăччĕ. Халĕ лару-тăру мĕнлерех-ши кунта?

Ачасем валли «Самант», «Тетте», «Тантăш» хаçат-журнал килсе тăрать. Антонина Павлова директор «Чăваш хĕрарăмĕ» çырăнса ыттисене те тĕслĕх кăтартрĕ. Учительсем кĕçех почтальонкăна сырса илчĕç. «Хаçат килсен эпĕ, юлташпа тĕл пулнă пекех, шутсăр савăнатăп. Кашниинчех мĕн те пулин çĕнни хăпартлантарать мана. Ял пурнăçĕпе çыхăннă статьясене кăмăлласах вулатăп вара», – палăртать Людмила Голубева повар. Лавккара ĕçлекен Любовь Мастеровăран та ăшă сăмах илтме кăмăллă пулчĕ.

Кĕçех 83-ри Прасковья Журина килне çитрĕмĕр. 20 çул Чурачăк почта уйрăмне ертсе пынăскер иртнĕ вăхăта аса илчĕ. «Район хаçатне çырăнтармалла тесе райкомран хытă хăвалатчĕç. Сирĕнешкел чĕлхе çÿхеличченех калаçрăм пулин те пĕр ялта пур пĕрех çырăнтараймарăм, – кăмăлĕн калаçрĕ кинемей. – Почтальонкăсем йывăр çын пекех утатчĕç, кашни кун 20 килограма яхăн çĕкле-ха... Мĕн пур кăларăм килсе тăратчĕ пирĕн пата. Хаçат-журнал патне ир кÿлĕмлех Ишлее лаша кÿлсе каяттăмăр. Почта çурчĕ хура мунча пек тĕксĕмччĕ, çĕр çумĕнчи пĕренесем çĕрнĕччĕ. Çĕннипе улăштартăмăр, чÿрече касрăмăр, обой çыпăçтартăмăр... Хĕлле урай питĕ сивĕччĕ, çавăн чухне шăннине пула ĕнтĕ сусăрлантăм, халĕ аран уткалатăп. Йăлтах калас тăк – талăк та çитмест», – шухăша каять Прасковья Алексеевна.

Курак Чурачăкри Шкул урамĕнче чулпа хытарнă çул çук та уйрăмах пылчăклă. «Кашни пухурах çул сарса паратпăр тесе шантараççĕ-ха. Ял-йыш хăй те пулăшма хирĕç мар, пĕлтĕр эпир хамăр урамра чул сарма субботнике тухрăмăр. Çынсене сĕт леçме тухма нушаллă-çке», – пăшăрханать почтальонка. Сĕт – Чурачăксемшĕн те тупăш кĕмелли çăл куççенчен пĕри. Хаçат çав укçапа çырăннине чылайăшĕ пытармарĕ. Юрпа хутăш çумăр çунине пăхмасăрах урамсем тăрăх малалла утрăмăр. Почтальон сумккинче ÿлĕмрен «Чăваш хĕрарăмĕ» 25 экземпляр хутшăннипе хăпартланнă май ăмăр çанталăк та, çăрăлакан пылчăк та кăмăла пăсаймарĕ.

**Почтальонпа Алина ИЗМАН çÿренĕ.**

# Хаксем ÿсеççĕ...

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИНДЕКС | Почтăра (ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен) | ÇЫРĂНТАРУ ХАКĔСЕМ (ПУШ УЙĂХĔН 31-МĔШĔЧЧЕН) | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | Почтăра | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| Хыпар | 54800 | 744-12 | 460-86 | 279 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | 78353 | 321-96 | 218-22 | 141 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 54804 | 375-96 | 272-22 | 231 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 11515 | 340-44 | 243-18 | 213 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 215-40 | 130-98 | 111 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 192-66 | 122-70 | 111 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 54838 | 379-80 | 226-62 | 162 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси–кил | 43887 | 192-66 | 102-90 | 84 | 84 | 61-20 |
| Тăван Атăл | 11529 | 319-08 | 251-76 | 216 | 216 | 168 |
| Капкăн | 24608 | 185-04 | 122-10 | 105 | 105 | 87 |
| ЛИК (Литература. Искусство. Культура) | 83429 | 140-36 | 127-92 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 54807 | 310-92 | 220-08 | 186 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | 54847 | 743-58 | 695-88 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 54802 | 280-44 | 192-18 | 132 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 181-02 | 155-64 | 156 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 143-52 | 119-58 | 111 | 111 | 90 |

Иртнĕ эрнере Раççей почти ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен хаçат-журнал хакĕсене ÿстерессине çинчен пĕлтерчĕ. Сăмахран, II çур çуллăха «Хыпар» хаçата пуш уйăхĕн 31-мĕшĕнчен 460 тенкĕ те 86 пуспа çырăнтараççĕ пулсан – акан 1-мĕшĕнчен 744 тенкĕ те 12 пус. Çакă, паллах, пире те – хаçат-журнал ĕçченĕсене – хытах шухăшлаттарать. Хаксен ÿснин сăлтавне Раççей почтин ертÿçисем федерации бюджетĕнчен укçа-тенкĕ уйăрманнипе çыхăнтараççĕ. Чăннипех çапла: çĕр-шыв правительстви хаçат-журнала валеçнĕшĕн субсиди уйăрманни çинчен пĕлтернĕ. Хаçат-журнал кăларакансен ирĕксĕрех çĕнĕ условисенче ĕçлеме тивет. Вăрттăнлăх мар: чылай çын халĕ кирлĕ хыпара Интернет урлă маларах илет. Хальлĕхе пурин те пĕтĕм тĕнчен «эрешмен картине» кĕрсе ÿкмешкĕн май çукрах-ха. Вулакана аван ăнланатпăр: вăл кашни пуса шутлать. «Хыпар» Издательство çурчĕн тусĕсене тепре аса илтересшĕн: пирĕн хаçат-журнала **пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен йÿнĕ хакпа** çырăнма васкăр. Вăхăт нумаях юлмарĕ – шутлă кунсенче почтальонпа тĕл пулма тăрăшăр. Çавăн пекех пирĕн кăларăмсене «Чăваш пичетне» «Советская Чувашия» хаçатăн киоскĕсенче тата редакцире альтернатива мелĕпе çырăнтараççĕ.

Акан 1-мĕшĕнчен пулакан хаксене вара таблицăра кăтартнă.

**Кĕске справка** *«Хыпар» хаçатăн каталог хакĕ /редакцие кĕрекен укçа/ 6 уйăха – 144 тенкĕ, çырăнтару хакĕ – 744 тенкĕ те 12 пус. 600 тенкĕ почтăна кайнине вулакан тавсăрса илчĕ пулĕ.*

ФЕСТИВАЛЬ

# «Раççей юррисем»

Çак эрнере пирĕн республикăра «Раççей юррисем» марафон фестиваль кĕрлесе иртрĕ. Унăн авторĕ тата йĕркелÿçи – Раççей халăх артистки Надежда Бабкина. Вăл хăйĕнпе пĕрле 120 ытла артист илсе килчĕ. «Русская песня», «Славяне», «Владимирские рожечники», «Криница» /Краснодар/, «Айкай» /Удмурт Республики/ ансамбльсем, «После одиннадцати»» ушкăн, «Живая планета» шоу-балет, Евгений Гор тата ыттисем Шупашкарта, Çĕнĕ Шупашкарта, Канашра, Элĕк, Куславкка районĕсенче концерт йĕркелерĕç.

6 çул хушшинче фестиваль Мускавра, Воронеж, Калуга, Курск, Липецк, Ростов, Кемĕр, Иваново, Новосибирск, Владимир, Чул хула, Ленинград, Мускав, Орел, Рязань, Ярославль, Пенза, Смоленск облаçĕсенче, Чăваш, Мари, Çурçĕр Осети-Алани, Карел республикисенче, Краснодар, Хабаровск, Алтай крайĕсенче, Ханты-Манси автономи округĕнче иртнĕ.

Эрне пуçламăшĕнче Надежда Бабкинăна Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев йышăнчĕ. Фестиваль пĕлтерĕшĕ пирки сăмах хускатрĕç. Надежда Георгиевна Шупашкарта 7 çул каялла пулнине аса илчĕ. Республика кунĕнче Хĕрлĕ лапамра иртнĕ концерт халĕ те унăн асĕнчен тухман. Çав самантра тĕрлĕ наци культури тĕл пулни, пĕр-пĕрин пултарулăхне курса чунпа вăйланни тавра сăмах пуçарчĕ юрăç.

Михаил Васильевич çакăн пек мероприятисем Раççейĕн нумай нациллĕ халăхĕсен культурине чĕртсе тăратма тата аталантарма пулăшнине палăртрĕ.

Унтан Надежда Бабкина ансамбль ертÿçисемпе пĕрле журналистсемпе тĕл пулчĕ. Раççей халăх артистки чăвашсен наци çи-пуçĕ, тĕррипе эрешĕ тыткăнланине пытармарĕ. Республика Пуçлăхĕ ăна ĕçе йĕркелеме пĕлнишĕн тивĕçлипех мухтанă. Çакă уйрăмах хăпартлантарнă хĕрарăма.

Надежда Георгиевна çакнашкал фестивальсем çĕршыври наци культура çыхăнăвĕсене çирĕплетме пулăшнине палăртрĕ. Ку мероприяти пĕлтерĕшĕ пысăк: вырăнти халăх хăнасен концерчĕсенче киленÿ илчĕ, аякран килнисем пирĕн тăрăхри юрă-ташă ăстисен пултарулăхĕпе паллашрĕç.

РФ искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Владимир Капаев çак фестиваль СССР саланнă хыççăн та юлташсемпе çыхăну тытма пулăшнине каларĕ. Унăн шухăшĕпе, пирĕн çĕр-шыв илемĕпе, мăнаçĕпе нихăш тăрăх та танлашаймасть.

«Раççей юррисем» марафон фестиваль йышĕнче аслă ăру çыннисем кăна мар, çамрăксемпе ачасем те пур. Наци культурине сыхласа хăварасси вĕсемшĕн чун киленĕçне çаврăннă.

Çурçĕр Осети-Алани Республикин халăх артисчĕ Магамет Карсанов яппун ăстисенчен тута купăсĕ илнĕ. Унăн шухăшĕпе çак инструмент хăйне евĕрлĕхне вĕсенчен лайăх ăнланакан çук.

Надежда Бабкина хăйĕн тахçанхи ĕмĕтне пурнăçа кĕртнĕ. Мускавра унăн проекчĕпе Туслăх çурчĕ çĕкленĕ. Ăна валли хыснаран пĕр пус та тăкакламан. Унта куракансене 3 зала пуçтарма пулать. Надежда Георгиевна ăна кĕркунне Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн çуралнă кунĕ тĕлне уçасшăн.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

КОНКУРС

# Чуна витереççĕ

Çак эрнере «Чĕнтĕрлĕ чаршав» конкурс çĕнтерÿçисене вун пиллĕкмĕш хут чысларĕç. К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш академи драма театрĕ Арсений Тарасов пьеси тăрăх «Мунча кунĕ» спектакль хатĕрленĕ. Авторпа режиссер пĕр-пĕрне ăнланса ĕçлени ăнăçу кÿнĕ.

«Çулталăкри чи лайăх спектакль» номинацире «Мунча кунĕ» спектакльшĕн Валерий Яковлев режиссер çĕнтерчĕ. Кĕтерук сăнарĕпе куракансен чунне витернĕшĕн Нина Яковлева «Хĕрарăм рольне чи лайăх калăплакан» ят çĕнсе илчĕ. Сăмах май, вăл мала тухнăшăн тивĕçекен укçана ыр кăмăллăх фондне хывассине йăлана кĕртнĕ. Жюри членĕсем Евгений Урдюкова чĕлхесĕр Мисаила вылянăшăн диплома хавхалантарчĕç.

«Ачасен чи лайăх спектаклĕ» номинацире кăçал та пĕлтĕрхи пекех Иосиф Дмитриев /Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕ/ палăрчĕ. Хальхинче «Чĕрĕ сăмах» ĕçшĕн /И.Трер/ хисепе тивĕçрĕ вăл. «Сергей Никитин артиста тав тумалла çакăншăн», – сцена çине хăпарсан сăмах илчĕ Иосиф Александрович. Çеçпĕл Мишши, Петĕр Хусанкай, Митта Ваçлейĕ, Геннадий Айхи сăвисенчен пуçтарнă композици каллех куç умне тухса тăчĕ. Çав сыпăксенче савăнăç та, куççуль те, юрату та сăнланнă. Малти вырăна унпа пĕрле Юрий Филиппов режиссер /Пукане театрĕ/ пайларĕ. Вăл «Я Вас люблю, Ромашка» спектакльпе /Сергей Козлов/ куракансен кăмăлне тупнă.

Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕ хатĕрленĕ «Отелло» спектакльте /Дж. Верди/ Иван Снигирев арçын рольне чи лайăх вылянă.

«Чи лайăх сценографи» номинацире Валентин Федоров ĕçĕ мала тухрĕ. Вăл «Отелло» спектакле илемлетнĕ.

«Спектакльти чи лайăх музыка» номинацире Андрей Галкина çитекен пулмарĕ. «Я Вас люблю, Ромашка» юмах валли кĕвĕ хайланă вăл.

«Я Вас люблю, Ромашка» ĕçре Чĕрĕпе вылянăшăн Петр Клементьев жюрин ятарлă парнине тивĕçрĕ.

Пуканесем уява юмах сĕмĕ кĕртрĕç. Уява пуçтарăннисем çĕнтерÿçĕсен ячĕпе чылайччен алă çупрĕç.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

# Осман çĕрĕнче

## Чăваш калем ăстисем Турцире иртнĕ Тĕрĕк журналисчĕсен пухăвне хутшăннă

### Пурнăçра та – кинори пек

– Нигяр... – паллаштарчĕ хăйĕнпе хуп-хура куç харшиллĕ чиперкке. "Домашний" телеканалпа Осман йăхĕ çинчен каласа кăтартакан "Великолепный век" сериала кăмăлласах пăхман тăк чăваш хăлхишĕн ют çак ят асăмра та юлас çукчĕ-ха. Ăна хăнăхса-вĕренсе çитиччен темиçе хут та ăшра калама тиветчĕ-тĕр. Хальхинче вара тӳрех сериалри Нигяр калфа аса килчĕ те Азербайджан пикипе йăл кулсах алă тытрăмăр. Хĕр Турци тĕп хулинче Анкарара экономиста вĕренет-мĕн, кăçал алла диплом илесшĕн. Ĕмĕчĕ пурнăçлансан Италие çул тытасшăн. Унăн тантăшĕ Сабина вара – Туркменистанран. Вăл та Анкарара вĕренет, француз чĕлхине шĕкĕлчет. Унăн ĕмĕчĕ Франципе çыхăнни каламасăрах паллă. Чăн та, диплом иличчен Сабинăн тата тепĕр çул вĕренмелле-ха. Пикесене пирĕн çума, туркăлла калаçма пĕлмен чăвашсем çумне, çирĕплетрĕç. Çавăнпа вĕсемпе çывăхрах паллашас кăмăл çуралчĕ. Тĕрĕк чĕлхисем пĕр-пĕринпе çывăх янăраççĕ. Çавăнпа та турккăлла, тутарла е азербайджанла пĕлсен пĕр-пĕрне çăмăллăнах тĕшмĕртме пулать. Çак ретрен чăваш чĕлхи, тĕрĕк çемйинчен тухнă пулин те, аякра тăрать. Чăн та, çамкана пĕркелентерсен уникуни перкелешме те, кăшт-кашт ăнланма та пулать – тымарсем çапах та пĕр-çке. Анчах та эпир ĕçлĕ çул çӳреве тухнă та перкелешни кăна çырлахтармасть пире – çак кунсенче Турцири Эскишехир хулинче Тĕрĕк тĕнчин журналисчĕсен пухăвĕ иртрĕ. Унта "Чăваш хĕрарăмĕн" журналисчĕ тата "Сăвар" телеканал ертӳçи Олег Цыпленков хутшăнтăмăр. Нигяр Гусейновăпа Сабина Султанова вара пирĕн çумран хăпмасăр йăлтах куçарса пычĕç. Тăван çĕр-шывĕсенче вырăс шкулĕсенче вĕреннĕскерсем темиçе чĕлхепе шăкăлтаттарса калаçаççĕ. Çапах та мĕншĕн хăйсем патĕнче мар, çуралнă кĕтесрен, ашшĕ-амăшĕнчен, çывăх çыннисенчен пин-пин çухрăм инçетре пĕлӳ туптама тĕв тунă-ха вĕсем? "Студентсенчен сĕтев ытла та нумай ыйтаççĕ пирĕн патра", – çакăн сăлтавне пĕр пытармасăр уçăмлатрĕç хĕрсем.

"Çул çӳрев" тесе паллă турăм та рубрика ятне, инçе çырса кайиччен çапах та çавăнтанах пуçлас-тăр...

### Машинисем хăтлăрах, хĕрĕсем кăмăллăрах... теççĕ

Сывлăша "Аэрофлот" самолечĕпе хăпартăмăр. "Шел, Турци авиалинийĕн машинисем те хăтлăрах, стюардессисем те кăмăллăрах", – палăртрĕç тӳрех тăтăш çул çӳрекенсем. Маншăн пулсан çула чĕррĕн тухса каялла та тĕрĕс-тĕкел çаврăнса çитесси пĕлтерĕшлĕрех. 2,5 сехет кăна вĕçетпĕр пулсан та вĕри апатпа сăйларĕç те, çавар туллин чăмланă май пуçра та çав шухăш кăна пулчĕ – ваттисем ыррăн çаврăнса çитме пулăшчăр кăна... 104 çухрăм çӳллĕшĕнче сехетре 800 çухрăм вĕçет хурçă машина. Харьков юлать аяла, Днепропетровск... Мĕн пулса иртет унта – мăнтарăн Украина çĕрĕнче? Эпир каялла çаврăнса çитиччен Крым шăпи те уçăмланать /халăхăн 90 процентчĕ Раççейпе пĕрлешессишĕн сасăланине эпир Турцире пĕлтĕмĕр/.

Аэропортра пире Бельгире пурăнакан турккăсем валли уйрăм харпăрлăхра тухса тăракан хаçат хуçи кĕтсе илчĕ /вăл та шăпах тăван çĕр-шывĕнче иртекен симпозиума хутшăнма çула тухнă/. Уйрăм çын аллинче пулсан та хаçат кăларас тĕлĕшпе тăкаксене саплаштарма укçа-тенкĕ енчен патшалăх та пулăшать-мĕн. Европăра чикĕсем хăйне евĕрлĕ иккенне кура хаçат Бельгипе юнашар вырнаçнă çĕр-шывсенче тĕпленнĕ турккăсен хушшинче те пурĕ 10000 тиражпа сарăлать. Тӳрех палăртса хăварас килет, Европăра хаçат кăларас ĕç питĕ кăткăс иккенне Бельги журналисчĕ кăна мар, Аслă Британире кăларăм йĕркелenisем те çирĕплетрĕç каярах.

### "Ватă хула"

Пирĕн çул Турци варринче Стамбултан – 350, Анкараран – 250, Кютахйăран 90 çухрăмра Порсук юхан шывĕ хĕрринче вырнаçнă Эскишехир еннелле тăсăлать. "Ватă хула" тенине пĕлтерет ку. Анчах та ятне кура мар хăватлăн аталанса пыраканскер хальхи йышшисенчен нимĕнпе те кая юлмасть. Хулара 1973 çулта уçăлнă Анадолу университечĕн 12 факультетĕнче, Википедие ĕненес тĕк, 880000 яхăн студент ăс пухать. Анадолу университечĕ студентсен йышĕпе Турцире – пĕрремĕш, тĕнчере тăваттăмĕш вырăн йышăнать. Сăмах май, Эскишехир XIV ĕмĕрте Осман патшалăхĕн тĕп хули пулнă.

### Автобусра – сăпкари пек

Çулсем çатма пек тикĕс пулнăран автобус сăпкари пек сиктерсе пынă май çула тухиччен Интернетра вуласа пĕлни аса килчĕ – çапах та мĕнле вырăна çитсе тухасси кăсăклăçке. Стамбул хули Мускавран 5 хут пысăкрах. 20 миллион çын пурăнать унта. Автобус чупать-чупать,васкать-васкать, хуларан ниепле те тухса пĕтейместпĕр – вĕçĕ-хĕрри курăнмасть. Акă – Босфор. Стамбула икĕ пая уйăрать вăл: пĕр пайĕ Европа, тепри – Ази. Чăн та, шухăш-кăмăлра ниепле те палăрмасть ку. Кĕçех уй варринче унта та кунта уйрăм çуртсем курăнма пуçларĕç – апла Стамбул тинех вĕçленчĕ. Çакă кăна кăсăклă – мĕн çисе, мĕн ĕçсе пурăнаççĕ кунта çынсем? Уй варринчи çуртсемпе юнашар нимĕнле производство та курăнмасть...

### Камăн мĕн шухăш?..

Шухăша арçын сасси татрĕ. Ак тамаша – автобусра, самолетри пек, стюарт çӳрет: çимелли-ĕçмелли сĕнет. Кун пеккине курма тӳр килменччĕ. Кашни ларкăч хыçĕнче – пĕчĕк телевизор. "Пирĕн патра пулсан ку автобус Патăрьелне е Шăмăрша çитиччен йăлт тăпăлтарса кăларса пĕтереççĕ-ха ĕнтĕ", – мĕлтлетрĕ пуçра шухăш. Çапла çул тăршшĕпе сăйланса пынă май вулаканăма каламалли тепĕр шухăш çуралчĕ пуçра. Ара, ĕçсен-ĕçсен турат вĕçне шыв килет вĕт. Хайхи пушатмăшсем вара /чăваш чĕлхеçисем "туалет" сăмаха çапла куçарма сĕнеççĕ/ йăлт – тӳлевлĕ. Çитменнине, туркă укçине кăна йышăнаççĕ. Ăçтан тупас-ха ăна, укçа çул çинче йăваланса выртмасть вĕт. Ахаль вара çапса пăрахсан та кĕртмеççĕ... Доллар тăсатăп – йышăнмаççĕ. "Шăлавар тăхăнни тивĕçтермест-ши кусене е хĕрлĕ çӳçĕм вĕчĕрхентерет-ши?" – çулташăм çапах та доллар тӳлесе кĕрсе пушатса тухнине кура явăнать пуçра шухăш. Анчах та хăйсен хĕрарăмĕсен хушшинче те çӳçне саратнисем, шăлавар тăхăннисем тăтăшах тĕл пулаççĕ. Çав хушăрах паранджине куçĕ кăшт кăна курăнмалла çыхса лартнă, хăп-хура тумтирлĕ хĕр-хĕрарăм та утать. Çук, Анăç стандарчĕпе аталансан та Тухăç хăйĕн ытамĕнчен вĕçертесшĕн мар курăнать Турцие. Мана вара çине тăрсах урăх ыйту, пушатмăшпа çыхăнни, кăсăклантарать. Çук, темĕнле тăрăшсан та унăн хуравне тупаймарăм. Юрать, пĕр хĕрарăм ман нушана ăнланчĕ курăнать, хăйĕн кĕсйинчен 1 лира тӳлесе кĕртсе ячĕ /18 тенке яхăн/. Унсăрăн таçта çитсе намăс курасси те нумай мар, ара, çул çинче 6 сехет иртрĕ вĕт. Вĕçĕмсĕр ĕçтереççĕ-çитереççĕ тата хăйсем. Вăт, вĕсен тараватлăхĕпе савăнса пыр... Çакна та каласа хăварасах килет. Автобус билечĕн хакне çапла апат-çимĕç кăна мар, малаллахи çул та кĕрет. Калăпăр, автобус пысăк хула автовокзалне илсе çитерет, сирĕн вара тата малалла каймалла. Ума пĕчĕкреххи çитсе чарăнать – хула тăрăх илсе каять, кирлĕ çĕре çитерет. Чи кирли, çакă йăлтах – пысăк автобус, апат-çимĕç, микроавтобус – билет хакне кĕрет, нимшĕн те хушса тӳлемелле мар. Каллех ĕнсене кăтăрт-кăтăрт хыçмалли кăна юлать: çĕр-шывра бензин, çунтармалли-сĕрмелли япаласен хакĕ пысăк, çул укçи вара пĕчĕк. Мĕнле майпа çука юлмаççĕ вĕсем?

### Ăшшăн ăсатрĕç те...

Тараватлăх енчен ӳпкелес килмест турккăсене – йăлт хăйсен шутĕнчен пăхрĕç. Ытла та лăпкă вĕсем, çакă кăна. Ыран мĕн пулассине пĕлет-и хăна е çук-и – кун пирки пуçĕсене ыраттармаççĕ вĕсем. Хăна хăй кускалатăр. Пире хăна çурчĕн хăтлă пӳлĕмне ăшшăн ăсатрĕç те ыранхи кун пирки паянах шухăшламалли пуçра та пулман. Тепĕр кун вара ирех... хырăм чăрлатнипе вăрантăмăр. Ресепшн вырăсла мар, акăлчанла та ăнланмасть, турккăлла вара эпĕ калаçмастăп. Хырăм вара выçать. Юрать, кĕсье пушах мар, хулана тухса çийĕпĕр. Çулташăм, Турцие кайкаласах çӳрекенскер, хăйне евĕр кĕлентĕрпе хăналама шантарать. Ăна çисен шалта чăкăртатма нумайлăха чарăнать-мĕн. Урамра халăх нумай мар – тăхăр сехетре кăна вăранать иккен хула. Ах, анчах, пĕр лавкка та, кафе те уçă мар. Пирĕн телее, кĕтесре пĕр арçын шăпах хайхи кĕлентĕре сутса тăрать. Мĕн тăвас тетĕн – вăл та лира кăна йышăнать! Темĕн пек сĕнсен те доллар илме килĕшмерĕ хайхи. Банк еннелле тĕллесе кăтартрĕ. Вăл вара тăххăрта кăна уçăлать. Сехет йĕппи çакăн пек вăраххăн шунине халĕччен асăрхаман... Чун пек кĕтнĕ алăк уçăлсанах унта васкарăмăр. Кăлăхах. Кунта улăштармаççĕ... Аптранипе каллĕ-маллĕ утатпăр. Тепĕр банкра малтан шанăç кӳчĕç-ха, анчах эпир вырăнтисем мар иккенне пĕлсен каллех каçару кăна ыйтрĕç. Ним тума пĕлменнипе каллех старик патне пырса доллар тăсатпăр. Мĕн тетĕр? Икĕ кĕлентĕре хутпа чĕркесе тыттарчĕ пире хайхи. Хăй енне тăснă доллара вара айккинелле кăна сирчĕ. Çапла вырăнти хĕрарăмпа арçын пулăшнипе намăс курасран та, выçса вилесрен те çăлăнса юлтăмăр...

Тĕнчери мĕн пур тĕрĕк журналисчĕсене мĕн хумхантарни пирки вара çитес номерте тĕплĕнрех çырса кăтартăпăр.

**Рита АРТИ.**
**Олег ЦЫПЛЕНКОВ сăн ӳкерчĕкĕсем.**



● ПИРЕ СТАМБУЛ АЭРОПОРТĔНЧЕ КĔТСЕ ИЛЧĔÇ.



● КĔЛЕНТĔРЕ ÇУЛ ВАРРИНЧЕХ СУТАÇÇĔ.



● ЧИПЕРУКСЕМ: САБИНА...



● ... НИГЯР.



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР



### Тăварланă хăярпа кишĕр салачĕ

**800 грамм кишĕр, тăварланă 2 хăяр, 200 грамм томат сĕткенĕ, пăрăç кирлĕ.**

Хăяра тăваткалласа турамалла, томат сĕткенĕ хушмалла, пăрăç ямалла. Çак хутăша теркăланă кишĕрпе пăтратмалла.

### Хĕрлĕ кăшманпа, хура сливăпа

**Пĕçернĕ 1 хĕрлĕ кăшман, шӳтернĕ 1 стакан хура слива, тасатнă 0,5 стакан аçтăрхан мăйăрĕ, 2 шăл ыхра, тăвар, хăйма кирлĕ.**

Хура сливăна, ыхрана вĕттĕн турамалла, хĕрлĕ кăшмана теркăламалла, аçтăрхан мăйăрне аш арманĕ витĕр кăлармалла. Çимĕçсене хăймапа пăтратмалла, тăвар хушмалла.

### Çĕр улмипе, мăйăрпа

**Пĕçернĕ 4 çĕр улми, вĕтетнĕ 3 стакан аçтăрхан мăйăрĕ, 80 миллилитр гранат сĕткенĕ, вĕтетнĕ 2 шăл ыхра, теркăланă пуçлă 1 сухан кирлĕ.**

Тăваткалласа туранă çĕр улмине турилккене хумалла.

Ыхрапа мăйăра тăварпа, суханпа, гранат сĕткенĕпе хутăштармалла. Çĕр улмине çак соуспа пăтратмалла. Салата петрушкăпа илемлетме юрать.

### Ăшне тултарнă кăмпа

**16 шампиньон, лимон сĕткенĕ, тĕтĕмленĕ 250 грамм сосиска, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Кăмпа тунине татмалла, шлепкине лимон сĕткенĕ сĕрмелле. Сосискăпа кăмпа тунине вĕттĕн тураса пăтратмалла, пăрăçпа тăвар сапмалла. Çак хутăша кăмпа шлепкине тултармалла. Ăна духовкăра 15-20 минут пĕçермелле. Апата вĕрилле çимелле.

### Кишĕр яшки

**Пĕçернĕ 150 грамм кишĕр, 150 миллилитр сĕт, 150 грамм услам çу, 20 грамм манна кĕрпи, 1 çăмарта сарри, 5 грамм сахăр, 300 миллилитр шыв кирлĕ.**

Вĕрекен шыва манна кĕрпи ямалла, 10 минут пĕçерсен теркăланă кишĕрпе сахăр, çăмарта саррипе сĕт хутăшĕ, услам çу хушмалла.

### Мăйăр печенийĕ

**2 стакан çăнăх, 100 грамм маргарин, 100 грамм услам çу, 0,5 стакан сахăр çăнăхĕ, ванилин, вĕтетнĕ 0,5 стакан аçтăрхан мăйăрĕ кирлĕ.**

Маргарина сахăр çăнăхĕпе, услам çупа пăтратмалла, çăнăх, ванилин, мăйăр хушмалла. Чустана 1 сехетлĕхе сивĕтмĕше хумалла. Кăларсан çаврашкасем тумалла. Печение духовкăра пĕçермелле. Сивĕнниччен сахăр çăнăхĕ сапмалла.

### Хĕрлĕ кăшман нимĕрĕ

**1 килограмм хĕрлĕ кăшман, 2 апат кашăкĕ сысна çăвĕ, 2 апат кашăкĕ çăнăх, 1/2 стакан хăйма, вĕретнĕ 1/2 стакан шыв, тăвар, сахăр кирлĕ.**

Пĕçернĕ хĕрлĕ кăшмана тасатса аш арманĕ витĕр кăлармалла. Сысна çăвне ирĕлтермелле, çăнăх хушмалла, хăйма, тăвар, пăрăç, шыв ямалла. Хĕрлĕ кăшмана çак хутăшпа пăтратмалла. Кăмăл пулсан лимон е шур çырли сĕткенĕ хушма юрать. Хĕрлĕ кăшман нимĕрне сурăх е пăру какайĕпе пĕрле çимелле.

### Кишĕрпе сыр

**800 грамм кишĕр, 50 грамм услам çу, 50 грамм сыр, тăвар кирлĕ.**

Пĕрчĕлесе туранă кишĕре çупа, шывпа пăшăхламалла. Сĕтел çине лартиччен ăна услам çупа пăтратмалла. Çиелтен теркăланă сыр сапмалла.

### Кăмпапа пулă пĕлĕмĕ

**Чуста çăрма 2 стакан çăнăх, шыв, тăвар кирлĕ. Ăшне хума типĕтнĕ 100 грамм кăмпа, шăмминчен тасатнă 400 грамм пулă, пуçлă 2-3 сухан, 1/2 стакан тип çу, тăвар, пăрăç хатĕрлемелле.**

Чуста çăрмалла. Кăмпана шыва ярса лартмалла, çемçеличчен пĕçермелле. Кăмпана, пулла, сухана аш арманĕ витĕр кăлармалла. Çак хутăша тип çупа ăшаламалла.

Чустана йĕтĕрлемелле, касса кăлармалла. Ăшне кăмпапа пулă хутăшĕ хумалла.

ЫЙТУ-ХУРАВ



**Уйăх тулнă самантра çӳçе кассан вăл чăнахах та лайăх ӳсет-и?**

Ку шухăшласа кăларнă япала. Талăкăн хăть те хăш вăхăтĕнче касни те, уйăх мĕнле тăхăмра пулни те çӳçе витĕм кӳмеççĕ.

**Сăрланине е хими мелĕпе кăтралатнине пула çӳç тăкăнма тытăнать-и?**

Паллах, питĕ тăтăш тата пахалăхсăр сăрлани е кăтралатни сиенсĕр иртмест – çӳç икĕ вĕçленме, татăлма тытăнать. Анчах çӳç урăх сăлтавпа та питĕ вăйлă тăкăнма пултарать.

**Тымарĕпе тăкăннă çӳç урăх шăтса тухмасть-и?**

Сывă çӳç пĕрчи тăватă çул пурăнать, унтан ӳкет. Ун вырăнне çĕнни шăтать, вăл киввине тымарĕпех тĕртсе кăларать. Çапла вара эпир кашни кун 20-60 çӳç пĕрчи çухататпăр.

**Çӳçе тăтăш çуни ăна тата ытларах çуллантарать-и?**

Çӳç ытларах çулланасси час-часах çунинчен мар, шампунь пахалăхĕнчен килет. Тăтăш уссă курма юрăхлине, çемçине суйламалла.

**Паха шампунь лайăх кăпăкланать-и?**

Ку пачах та апла мар. Шампунь мĕн чухлĕ çемçерех, кăпăк çавăн чухлĕ сахалрах. Ытлашши кăпăка пула çӳç таткаланма, икĕ вĕçленме пуçлать.

**Пуçа çунă чухне массаж туни лайăх витĕм кӳрет-и?**

Шампунь сĕрнĕ чухне пуçа массаж тума юрамасть. Темле лайăх шампунь та çӳç тымарĕн лакăмне сăрхăнса кĕрсе çу кăларакан парсен ĕçне вăйлатать.

**Щетка-турапа тăтăш усă курма юрамасть-и?**

Маларах çакă юна лайăх çӳреме пулăшать, çӳç тымарне çирĕплетет тесе шухăшланă. Халĕ çапла каланине пăрахăçланă, кун пек турапа тăтăш усă курни çӳçе таткалантарать çеç.

УСĂЛЛĂ КАНАШСЕМ

## Пушмак сăнне тавăрма

Замш пушмака наждак хучĕпе е типĕ тăварпа сăтăрмалла, унтан ятарлă щеткăпа тасатмалла. Тĕсĕ кайнишĕн ан пăшăрханăр, çак вырăна лайăх тасатса сăрлама май пур.

Йĕпеннĕ пушмака хĕвел çинче е çулăм çывăхĕнче типĕтмеççĕ. Ăна типĕ çĕтĕкпе сăтăрса касторка сĕрмелле. Шала кивĕ хаçат тултарса чалăшшăн лартмалла. Типнĕ вăхăтра тĕпĕ çĕре ан перĕнтĕр.

## Чечек чирлесрен

Çуркунне чи малтанах сухан евĕр тымарлă чечексем пуç кăлараççĕ. Папки курăнма пуçласан ăна апатлантарма манмалла мар. 1 тăваткал метра 15 грамм комплекслă ятарлă им-çам сапмалла е калипе тата суперфосфатпа апатлантармалла.

Сухан евĕр тымарлă чечексем ӳсекен йăрансем çине тислĕк сапмалла мар, чечеке чирлеттерме пултарать.

Час-час шăвармаллине ан манăр, типĕ те ăшă çанталăкра – пушшех те.

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

## Çура йышлă илес тесен

**Сысна ами йышлă çăвăрласси мĕнрен килет-ши?**

**П.ВЛАДИМИРОВ.**
Йĕпреç районĕ.

Çакă сысна амине çителĕклĕ тăрантарнинчен, лайăх пăхса усранинчен килет. Тин çеç пĕтĕленнĕ амана, уйрăмах малтанхи эрнесенче, лайăх пăхмалла, мĕншĕн тесен шăпах çав тапхăрта выльăх варĕнче тĕвĕленекен çурасен аталанăвĕ пĕлтерĕшлĕ. Сăмахран, сысна амине аçапа «тĕл пултарнă» хыççăн тӳрех ытти выльăхпа пĕрле мар, лайăх та лăпкă вырăна хупмалла. Апат сахал лекнипе тата хăйсене ыттисем «кӳрентернине» пула ама пĕтĕленмесĕр юлма пултарать.

Нумай çура тĕвĕленнĕ чухне сысна ами çителĕксĕр çинипе, организмри япаласен ылмашăвĕ пăсăлнипе вилме пултарать. Мĕн чухлĕ çура илесси шăпах епле тăрантарнипе çыхăннă. Рационта А витамин çителĕклĕ пулни çурасене тĕрĕс-тĕкел аталанма май парать. Чуптарнă хыççăн, çавăн пекех çăвăрлас умĕн 2 эрне маларах А витаминпа укол туни усăллă.



## Лайăх аталанма

Выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк валли ветеринари аптекисенче темĕн тĕрлĕ препарат та сутаççĕ, çав шутра – витаминпа минерал хутăшĕ те. Рациона вĕсене кĕртмелле-и е кирлех те мар-и? Специалистсем выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕке хушма апат памаллах теççĕ. Сăмахран, вĕсене чылай чухне кальци тата фосфор çитмест. Асăннă минералсем япаласен ылмашăвне лайăхлатма, шăмăсене çирĕплетме, рахитран асăрханма, урапа сыпă чирĕсенчен сыхланма пулăшаççĕ. Кунсăр пуçне вĕсем выльăха аталанма тата тĕреклenme, иммун тытăмне ӳстерме кирлĕ. Рациона витаминсемпе, микро- тата макроэлементсемпе пуянлатсан выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕкĕн – ӳт хушаслăхĕ, ĕнен сăвăмĕ ӳсет. Чăхсем çăмарта ытларах тума пуçлаççĕ. Фосфорпа кальци препарачĕсем çăмарта хуппине çирĕплетеççĕ.



ТĔКĔР УМĔНЧЕ

## Çӳçе илем кӳме



Йăлтăртаттăр тесен 2 чей кашăкĕ лимон сĕткенне 1 стакан шыва ярса пăтратмалла та йĕпе çӳçе сĕрмелле.

Çӳçе кирлĕ пек вырттарма мусс вырăнне сăрапа усă курма пулать.

Çӳхе те вăйсăр çӳçе илем кӳме йĕтĕн вăррин шывĕ пулăшать. 1 чей кашăкĕ вăрра çур стакан шывра 20 минут вĕретмелле. Сивĕнсен сăрăхтармалла, кирлĕ пек усă курмалла.

Çӳçе хытарма тăвар е сахăр шывĕ юрăхлă.

ЧУНРИ

# Савни мар, юлташ кăна

Санăн мăшăру пур. Çемьеллĕ çынсен пĕрпĕрне улталама юрать-и вара? Анчах эсĕ кашни кунах манпа тĕл пулу шыратăн. Тĕрлĕ сăлтав тупса ывăнтăм ĕнтĕ. Суйса та йăлăхрăм. Атя-ха, ача вăййи выляр мар урăх. Килĕшетĕн мана, пытармастăп. Лайăх çын эсĕ. Анчах та ку юратнине пĕлтермест-çке-ха. Туслă пулма хирĕç мар санпа. Урăх нимĕн те кирлĕ мар. Ан кĕр манăн пурнăçа, ан та пăтрат. Пĕччен те лайăх мана. Кайран уйрăлма йывăр пулĕ. Пĕлетĕп, эсĕ маншăн темĕн тума та хатĕр, нимĕн те шеллеместĕн. Ырă кăмăллă та пуян чунчĕреллĕ эсĕ. Калаçма та интереслĕ санпа, сăмах та хăйне хăй сыпăнса пырать. Тахçантахçан эсĕ ăçта пулнă-ши? Халĕ те, шăнкăравласанах, сан сассуна илтсенех пăлханма пуçлатăп. Санпа паллашиччен, сана куриччен мана çăмăлрахчĕ. Пурăнаттăм хамăн тĕнчере нимĕн çинчен те шухăшламасăр. Тĕлĕнетĕп арçынсенчен тепĕр чухне, юттисен çумĕнче мĕн шыратăр-ха эсир? Мăшăр мĕнпе тивĕçтермест?

Çырăвусене калама çук хитре шăрçалатăн. Такам чунне те ирĕлтерме пултаратăн çав. Çапах та туслăхсăр пуçне нимĕн те пулаймасть пирĕн хушăра, ăнлан çавна. Йăнăш утăм туса пурнăçа аркатас килмест. Вăйă выляса чунна та çунтарас килмест. Мăшăрна шел. Юрататăни, юратмастăн-и – пĕрре çемье чăмăртанă пулсан упра ăна. Мана çывăх пĕлместĕн те – çавăнпа малтанлăха саншăн кăсăклă пуль.

Пĕрмай парнепе чечексемпе иртĕхтерни те аван мар. Тепĕр хут ыйтатăп, манса кай мана. Арăмна улталаса айккинче çĕнĕ юрату шыраса та ан çÿре. Вăл сана шанать, хисеплет. Эсĕ киле вăхăтра таврăнманнишĕн те пăшăрханать. Савни мар, ахаль юлташ пулма хирĕç мар эпĕ.

Эсĕ манран 15 çул аслă. Тепĕр тесен, эпĕ качча кайма пултарайман хĕр мар вĕт. Вăхăт çитсен çемье çавăрăп. 25 çултах хама ват хĕр шутне кĕртесшĕн мар-ха. Авланманнисем те куç хываççĕ мана. Аттепе анне те санран 4 çул çеç аслă.

Вăхăт сиплет теççĕ. Хăв йăвуна хăв ан аркат. Мĕн пуррине упра. Манпа çапах телейлĕ пулаймастăн. Пурăна-киле пĕр-пĕрне пачах ăнланма пăрахăпăр. Расна çулсем пирĕн. Санăн хăвăн, манăн хамăн пурнăç.

**АЛЕНА.**
Шупашкар хули.

ЭХ, ПУРНĂÇ

# Саккунлă еркĕн

"Пĕрлешиччен эсĕ капла марччĕ вĕт-ха", – кăшкăрашать кÿршĕ хĕрарăмĕ упăшкине тарăхсан. Пĕрмаях вăрçăннăран уйрăлса каяççĕ пулĕ тенĕччĕ. Çук, нумаях пулмасть виççĕмĕшне кун çути кăтартрĕç. Çĕр-шыври демографи лару-тăрăвне лайăхлатассишĕн тăрăшни аван паллах. Анчах кăн-кăвак куçлă хĕр ача обществăн пĕр сыпăкĕнче лару-тăрăва улăштарма пултарайманĕ пулас.



Виçĕм кун акă каллех чашăктирĕк шăкăртатни илтĕнетчĕ. Ĕнер – шăп.

Ялан çапла вĕсен. Çил-тăвăл хыççăн – шăплăх. Çеруш каллех Çурçĕре вĕçтерĕ пулас.

Курăпăр, ылтăн эреш илсе килет акă арăмĕ валли. Тепĕр майлă каласан, куçа тĕтрепе витет. Унран лайăх арçын çук та тейĕн, "Çеруш" та "Çеруш"... – илтĕнсе тăрать кÿршĕре. Хĕрарăм хăйне хăй улталать вĕт. Анчах чĕлхене çыртма тивет. Маншăн кÿршĕ куçĕ савăнăçпа çиçни пĕлтерĕшлĕрех. Макăрни мар ĕнтĕ. Кун пек чухне манăн та, кун-çулăма аса илнĕ май, кăмăл хуçăлать. Хама та çăмăл мар, манăн вара ăна ăпăлантарма сăмах шырамалла.

Çерушпа Танюк пурнăçĕ вулкана аса илтерет. Анчах ку, кÿршĕри, сирпĕнсе те тухаймасть, лăпкă "çывăрма" та ăна тем кансĕрлет. Анчах темшĕн хăçан та пулсан çав-çавах вăл çулăм-хĕмпе ялкăшса илессĕн туйăнать. Е ĕмĕрлĕхех лăпланать-ши? Çук, ĕненес килмест. Арçынна улăштарайман вĕт. Темиçе уйăхлăх инçете ĕçлеме тесе тухса каять те ирĕклĕн пурăнать. Килĕнче вара уйăх та кун кунламасть. Тем тесен те лере такам пурах унăн. Каялла ахальтен çапла васкас çук вăл. Анчах Танюк çакна курмасть те тейĕн. Тен, курмăш пулать?

Укçаран таталмасть, ачисем тутă та чаплă тумтирпе çÿреççĕ. Черчен туйăмсем пирки шухăшлама вăхăчĕ те çук ĕнтĕ унăн. Арçын ăшшине вара кашни каçах туяс килнине хам та лайăх пĕлетĕп. Çапах вăл ÿпкелешмест, уншăн ачисене ура çине тăратасси пĕлтерĕшлĕрех-ши? Ачисен ашшĕ те, амăшĕ те пултăр тесе хăй пирки пачах та аса илмест пулмалла.

"Эпĕ 3 ачапа кама кирлĕ пулăп?" – тет вара упăшкине юраймасан. Лешĕ, чăнах та ĕнтĕ, чăкăлтăш. Танюк тĕпренчĕкĕсемпе аппаланнă вăхăтрах ресторанти пек тутлă апат пĕсерме мĕнле майпа ĕлкĕрни маншăн вăрттăнлăх. Хваттерĕнче тусан таврашĕ курнине ас тумастăп та. Тĕлĕнмелле, çав-çавах арçыннăн сăмаха хирĕç илме сăлтав тупăнатех.

Шуйттан арçынĕ, ăсне тытсах виççĕмĕшне çураттарчĕ вĕт. Чăнах та, кун чухлĕ ачапа арăмĕ ниçта та каяймассине пĕлет-ха та. Мăшăрне килĕштернĕ ĕçĕнчен те пăрахтарчĕ. Танюк халĕ халат хывма вăхăт тупайман кил хуçи хĕрарăмне çаврăнчĕ. Унччен "чăнкă" майра пек çÿретчĕ.

Танюка ăнланма та пулать. Упăшки чăнах та пăхмалăх пур: вăрăм та кĕрнеклĕ. Куç хăрпăкĕсем чипер пикен пек çÿлелле çаврăнса тăраççĕ, кулнă чухне пит çăмартийĕ путать. Хумлăн-хумлăн вырткан кăпăшка çÿçне ачашлас килсе тăрать. Çак иleme ытарайман ĕнтĕ Танюк. Вăл хăй питĕ вăтанаканскер. Вĕрентекенсен çемйинче ÿснĕскер аларан кĕнеке яман. Çамрăка юратуллă хутшăнусем аслă классиксен хайлавĕсенчи пек туйăннă ĕнтĕ. Чипер Çеруш вара – принц выранĕнче.

Хĕрарăмсен витĕмĕ вăйланса пынă ĕмĕрте пурăнатпăр пулин те Танюк хăйне декабрист арăмĕ пек тытнăнах туйăнать. Кĕтет, ĕненет, шанать, çав тери парăннă упăшкине. Чĕнсен унпа тĕнче хĕрне кайма хатĕр. Ачисем пĕчĕк пулни кăна тытса чарать. Килти арçын ĕçĕсене те хăех пурнăçлать, çапах та – "Çерушăм" та "Çерушăм" тени кăна илтĕнсе тăрать.

Нумайăшĕ çакна йĕркеллĕ пулăм тесе йышăнать, çаплаи? Сахал мар чăваш хĕрарăмĕн йăрансем туса пахча çимĕç, çĕр улми лартма, утă çулса типĕтме, "иккĕмĕш çăкăра" кăларса пуçтарса кĕртме тата йывăр нумай ĕçе пĕччен пурнăçлама тивет. Упăшкасем вара – шапашкăра, укçа "тăваççĕ". Тĕрĕсех-ха ĕнтĕ, ачасене ура çине тăратмалла, кил-çурта çĕнетсех тăмалла... Анчах юлашки вăхăтра темшĕн "çемье" ăнлав улшăнса пынăн туйăнать. Хĕрпе каччă пĕрле пулма пĕрлешет. Анчах та паянхи çемье пусĕсем тăçта инçетре. Вăл килне хутран-ситрен килсе кайнипе çырлахать арăм. Упăшка паян еркĕн евĕр, çапла мар-и вара? Ахальлинчен саккунлă пулнипе кăна уйрăлса тăрать.

Çапах, темле пулсан та, арçынсăр та пурăнаймасть хĕрарăм. Хăть кун пек, анчах пĕччен мар... Çакна ăнланмастăп: мĕншĕн çут çанталăк хĕрарăма çемçе чунлăрах тунă? Ултава каçарма та вăй-хăват тупать-ха та вăл. Пĕр вăхăтрах çемçе чунлă та, çирĕп кăмăллă та. Тĕрĕссипе, арçынсăр çухалса каймасть-ха вăл. Тен, унсăр лайăхрах та пурăнĕ. Çук вĕт, арçын патнеллех туртăнать...

**Н.МАРИНОВА.**

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Лайăх хуняма

Канмалли кун хăнана хуняма килчĕ. Яланхи пекех пысăк сумкăпа. Ывăлне ыçăпа аптăратасран хăрать вăл, çавăнпа та кашни эрнерех сивĕтмĕше апатçимĕçпе тултарать. Какай, çăмарта, пулă, çăнăх-кĕрпе... туянса укçа тăкакламастпăр эпир – йăлт хуняма тивĕçтерет. Хваттер, машина, сĕтел-пукан – вăл илсе панисемех. Хамăрăн шалупа çи-пуç туянатпăр, ют çĕршыва канма çÿретпĕр.

Хуняма вĕçĕм киле-киле тĕрĕсленине малтанах хăнăхма йывăрччĕ. Хыâннă-хывăнман тÿрех тĕпелте хуçаланма тытăнать-ха та. «Ман Егорушкăна пăтă çитерсе усратăн-и? Капла вăл сана чылай тÿссе пурăнаймĕ...» – текелесе апат пĕçерме тытăнать. Çакă мана шутсăр тарăхтаратчĕ. Кашни кун плита умĕнче тăрса ывăнатăп та халĕ хирĕçлеместĕп. Ăшталантăр-иç, Егорушка начарланĕ тата...

Пĕррехинче хуняма чÿрече карри йăтса килчĕ, эпĕ илсе çакни килĕшмест-мĕн ăна. Унпа тавлашма пăхрăм та, кÿренчĕ. Икĕ эрне килмерĕ. Мăшăрăм амăшĕн апачĕшĕн тунсăхлани пирки калаçма тытăнсан çывăх çын патне шăнкăравларăмăр, вăл туяннă чÿрече каррине çакса хутăмăр. Пуш-пушă сивĕтмĕше курсан хуняма пăлханса ÿкрĕ.




Кутамккине пушатса тепĕр хутчен пасара тухса чупрĕ. Киле каяс умĕн укçа та парса хăварчĕ.

Тепрехинче хуняма пирĕн хваттерте обой улăштарма палăртнăччĕ: хăйне килĕшнине туянса та хунă-мĕн. Пирĕн хăтлăхшăн тăрăшакан çынна мĕншĕн кансĕрлес? Обой тĕсĕ килĕшменнине палăртмасăрах ĕçе тытăнтăмăр.

Манăн хуняма лайăх çав. Хуняма пире йăлтах хăй ирĕкĕпе пулăшать-çке. Егорушкăн аппăшĕ ют çĕр-шывра ытлă-çитлĕ пурăнать, ашшĕ-амăшне хушăран укçа-тенкĕ ярса парать. Хуняма та, хуняçа та пенси лайăх илеççĕ, унсăр пуçне ашшĕ ĕçлеме пăрахман-ха. «Вăл сире хăвăр пĕлнĕ пек пурăнма памасть», – тесе пĕлĕшĕмсем кăлăхах кÿлешеççĕ. Ăмсанаççĕ ахăртнех.

Качча килсенех мана, çара çерçи евĕрскере, хуняма йăлтах тумлантарчĕ, хăйĕн ачи вырăннех йышăнчĕ. Çавăнпа унпа чĕрре кĕместĕп, чăтатăп. Чĕлхене ирĕке яманнине кура хутшăну та лайăх пирĕн. Упăшкашăн та пăшăрханатăп эпĕ: арăмĕпе амăшĕ хирĕçнĕ чухне унăн камăн хутне кĕмелле-ха? Иксĕмĕре те пĕр пекех юратать-çкеха вăл.

Чун тĕпĕнче çилĕ юлнă-ха хунямана, анчах эпĕ ăна палăртмастăп: виççĕмĕшне çуратма ирĕк памарĕ вăл. Пепкемсем майĕпен ÿсеççĕ, тепре те ытлашши марччĕ... «Вĕçĕм чирлеççĕ, канăç çук. Иккĕпе те çитет, вĕсене ура çине тăратасчĕ», – касса татрĕ вăл. Унăн сăмахĕнчен иртейменрен çие юлнине пăрахма тиврĕ.

Хунямана хуняçа та пăхăнса пурăнать. Ĕмĕрĕпех ертÿçĕре ĕçленĕскер çынпа хуçаланма хăнăхнă, çакăнпа çемьере пурте çырлахнă ĕнтĕ. Ют мăнастирте йĕрке тăвасси пирки эпĕ те ĕмĕтленместĕп. Чи кирли – хамăн кил-çурт, упăшка, ачапача – йăлтах пур. Хуняма пурăннă чух выçлăх та, укça çукки те хăратмĕ пире. Ытти-ытти – тарама...

**Алина ИÇĔМПИ.**

# Иртнĕ вăхăт парни

Роза ШЕВЛЕПИ



Аса илӳ сукмакĕпе утатăп та утатăп. Вăл, асамлăскер, тăста та илсе ҫитерме пултарать.

Шухăшлатăп та тĕлĕнетĕп. Тахҫан пулса иртнĕ, манăҫнă самантсене вăхăт нумай ҫул иртсен парне пек илсе ҫитерет ҫын патне, хумхантарать, савăнтарать – иртнĕ вăхăт сукмакĕсемпе уттарать.

Ас тăватăп-ха, хĕл кунĕсенче хуняма пирĕн пата хулана хăнана ҫитме вăхăт тупатчĕ. Пĕрре те ĕҫсĕр ларасшăн марччĕ вăл:

– Кин, чăлха-нуски саплаmallisem пур пуль ĕнтĕ. Тен, ҫĕтĕк ҫурмалли тупса парăн /кив япаласене ҫурса-чĕрсе кавир ҫыхма юрататчĕ/.

Мĕн те пулин тупса памаллахчĕ вара ăна.

Ăна сăнама юрататтăм. Васкамасăр, типтерлĕ тăватчĕ вăл пур ĕҫе те. Ларсан-ларсан ассăн сывласа илетчĕ.

– Мĕн питĕ кулянтарать вара сана, анне? – теттĕм.

– Эх, тур, кин, шухăшпа ăҫта кăна ҫитсе ҫапăнмастăн... Тахҫан пулни-иртни аса килет, кашни тăван-юлташпа, ачасемпе калаҫатăн...

* * *

Тĕлĕнетĕп... Мĕне пула ман пурнăҫри тахҫанхи ҫак пулăмсене вăхăт ман пата тавăрчĕ пулать-ха?..

Вăл кун кĕтмен ҫĕртен тавралăха ҫумăр пĕлĕчĕсем хупласа илчĕҫ те самантрах витререн тăкнă пек ҫумăр пуҫланчĕ. Нумаях та пымарĕ хăй, ҫинҫе урисемпе питĕ васкаса кăнтăралла чупсах кайрĕ.

Ҫумăр... Ҫуллахи ҫумăр... Вăхăт мана ачалăх тĕнчине тавăрать:

– Ас тăватăн-и? – тет.

Ачалăх тĕнчи пуян, иртнĕ самантсем асра чул ҫине касса ҫырса хăварнă пек ҫырăнса юлаҫҫĕ, нихăҫан та манăҫмаҫҫĕ. Вăхăт вĕсене упрать.

Ҫапла... Вăл кун ҫумăр ҫуса иртнĕччĕ. Ас тăватăп... Питĕ лайăх ас тăватăп...

Маруҫ аппапа анне иртенпех тем ҫинчен питĕ шухăшлăн калаҫрĕ. Анне Маруҫ аппан кашни сăмахне хирĕҫ:

– Ҫук, Маруҫ, ҫук, ҫук, – терĕ.

Вĕсем мĕн ҫинчен калаҫни мана пĕрре те шухăшлаттармарĕ. Эпĕ, пилĕк ҫулти ача, вĕҫĕмсĕр пӳртрен крыльца ҫине тухса ҫумăр хыҫҫăнхи тавралăха сăнарăм: курăк сипсимĕс, хĕвел те йăвашшăн кулса ячĕ.

Анне те крыльца ҫине тухрĕ:

– Хĕвел хĕртсе пăхсан ҫул час типет. Тен, паянах киле ҫитĕпĕр, – терĕ. /Пирĕн ял кунтан 7-8 ҫухрăмра кăна/.

Маншăн ку сăмахсем нимех те пĕлтермерĕҫ. Маншăн кил вăл – анне ҫумĕнче. Анне ăҫта – манăн кил ҫавăнта. Анне ҫумра пулмасан эпĕ – чи телейсĕр чун.

Ас тăватăп, тăватă ҫулта чухне вăл мана хăйĕн йăмăкĕ патĕнче темиҫе куна хăварса кукамай патне кайнăччĕ. Чи хурлăхлă, чи асаплă, чи вăрăм кунсем... Ҫапла асра юлнă ҫав вăхăт.

Халĕ вара анне манпа тата пĕчĕк йăмăкпа киле таврăнма пуҫтарăнать. Кирек ăҫта илсе кайтăр, анчах хăйпе пĕрле. Тата йăмăкпа пĕрле.

Ача-пăча яланах ҫĕнĕлĕхе кăмăллать. Ҫула тухассине ăнланса илсенех эпĕ чăтăмсăррăн кулкалатăп, хама валли вырăн тупаймасăр пĕрре картишне тухатăп, тепре пӳрте кĕретĕп. Пĕрре анне ҫумне пырса тăрса ун ҫумне тĕршĕнетĕп, тепре Маруҫ аппана пырса ыталатăп. Хăвăртрах ҫула тухас кăмăллăскер, тутлă ыйхăпа ҫывăракан пĕчĕк йăмăка пырса пăхатăп, пĕчĕк ҫеҫ пӳрнисене ачашшăн сĕртĕнетĕп.

* * *

Хĕвел хĕртсех пăхма тапратрĕ. Кăнтăрла тĕлне, анне калачă пекех, картишĕнче те, урамра та ҫул самаях типрĕ.

Апла пулсан эпир кĕҫех ҫула тухатпăр. Анне калачă тăрăх, киле каятпăр.

Маруҫ аппа патĕнче эпир атте вăрҫа тухса кайиччен пурăннăччĕ. Эпĕ ăнланнă пек пулсан, вăл вăрҫа тухса кайсан аннене тăван ял ҫывăхĕнчи шкула ĕҫлеме куҫарнă пулать. Маруҫ аппа пĕччен пурăннă. Ҫакă уншăн питĕ йывăр пулнă ахăр. Ҫавăнпа вăл пире хăй патне йышăннă. Вăрçă пуҫлансанах мăшăрĕпе сыв пуллашнă хĕрарăм. Нумай та вăхăт иртмен – вилнĕ хучĕ килсе ҫитнĕ. Йывăр пулнă Маруҫ аппана.

* * *

Питĕ кăмăллатчĕ мана Маруҫ аппа. Хăй ачине юратнă пекех юрататчĕ. Мана валли ялан таҫтан тутлă кучченеҫ тупатчĕ.

Эпир киле куҫса каясси пирки калаҫу пуҫлансан яланах унăн куҫĕ шывланатчĕ:

– Мĕншĕн сире йышăнтăмши? Пĕччене пурăнмалла пулнă. Халĕ мĕнле хăнăхмалла-ха ĕнтĕ пĕччене лĕхе? – тетчĕ аннене.

Маруҫ аппа яланах типтерлĕ тумланатчĕ. Пуҫне шурă тутăр ҫыхса ҫӳретчĕ. Пĕртен-пĕр япала килĕшсех каймастчĕ мана. Хитре кĕпе-саппунĕ ҫинчен арҫын пиншаккине тăхăнатчĕ. Хĕр ача хĕр ачах ҫав. Пĕчĕккĕ пулсан та ăна-кăна чухланă. Халĕ, нумай-нумай ҫул иртнĕ хыҫҫăн, пиншак тăхăнса ҫӳренин сăлтавне питĕ лайăх ăнланатăп.

Аннепе Маруҫ аппа хăш чухне сĕтел хушшине ларатчĕҫ те темччен шăкăлтататчĕҫ. Эпĕ вĕсене йĕкĕлтесе те пăхаттăм.

– Икĕ Маруҫ пĕр-пĕрне юмах каласа параҫҫĕ, – теттĕм /манăн анне те Маруҫ ятлăҫке/.

Ача-пăча хăлхи питĕ ҫивĕч. Аслисем асăрхамаҫҫĕ те вĕсене. Лешсем йăлт илтеҫҫĕ. Калаҫу мĕн ҫинчен пынине ăнланнă-и, ҫук-и – ку урăх япала. Анчах илтнĕ. Эпĕ те Маруҫ аппапа анне мĕн калаҫнине илтнĕ ҫав.

– Ĕненместĕп эпĕ ку хута, – терĕ пĕррехинче Маруҫ аппа. – Ĕненместĕп. Йăнăш хутсем килни ҫинчен мĕн чухлĕ калаҫаҫҫĕ. Ав кӳршĕ ялта та вилнĕ хут килнĕ. Унччен те пулман, мăшăрĕ хăй аманни, госпитальте выртни ҫинчен ҫырса янă. Манăн Кĕркури таврăнатех. Ҫара тухса кайиччен вăл мана ҫапла каларĕ: «Эсĕ шухăшпа ялан манпа пул. Эпĕ те санпа пулăп. Пĕрпĕрне ҫапла пулăшăпăр. Ĕҫпемĕнпе манса та кайăн, апла ан пултăр тесен эсĕ ман пиншака тăхăнса ҫӳре. Вара ялан эпĕ санпа, эсĕ манпа пулăн. Эсĕ мана пулăшса пырăн».

Тĕрĕс те пуль. Кашни ҫыннах хăйĕн чи ҫывăх ҫыннин чун хумханăвне пĕр-пĕринчен темле аякра пулсан та туять теҫҫĕ-ҫке.

Ҫав пиншак Маруҫ аппашăн мăшăрĕнчен юлнă паха парне пулнă. Вăл ялан мăшăрне аса илтернĕ ĕнтĕ. Текех ҫумра ҫук мăшăрĕн тумĕ унăн чунне ăшăтса, вăй-хал парса тăнă.

* * *

Аннепе Маруҫ аппа нумай ҫул иртсен те пĕр-пĕринпе курнăҫсах тăратчĕҫ. Ĕҫкĕ-ҫикĕ пухсан та Маруҫ аппана яланах чĕнетчĕҫ.

Пĕррехинче Маруҫ аппа пирĕн пата хăнана пырсан мана хăй ҫумне лартса ҫитĕннĕ ҫынпа калаҫнă пек калаҫрĕ:

– Ачам, – терĕ. – Манăн сана хам ҫумра пултарасах килет. Эсĕ асран тухмастăн. Пĕчĕккĕ чухнех, эсир ман патăмра пурăннă чухнех, хăвăр яла куҫса килнĕ чухне, сана манпа хăварма ыйтрăм: хамăн ача тăвасшăнччĕ, мĕншĕн тесен юрататтăм та, шеллеттĕм те. Аннӳне те шеллеттĕм. Вăрçă вăхăчĕ – выçă вăхăт. Икĕ ачапа пĕччен. Пулăшакан никам та ҫук. Эпĕ пĕччен тертленеттĕм. Ĕмĕр тăршшĕпех пĕччен пулнă: атте-аннерен час юлнă, вĕсен ăшшине туйса та ĕлкĕреймен. Ҫунат айне илекен тăван та пулман. Ют ҫунат ăшăтаймасть ҫав. Сана хам ача пек ӳстерес тесе тăрăшни усăсăр пулчĕ. Аннӳ килĕшмерĕ. Халĕ ĕнтĕ эсĕ пĕчĕк ача мар /эпĕ ун чухне 13 ҫултаччĕ/, санпа хăвăнпа калаҫма пулать.

Эпĕ Маруҫ аппана питĕ тĕлĕнсе итлерĕм:

– Ачам, – тет Маруҫ аппа. – Шкул вĕренсе пĕтерсен, тен, ман пата пурăнма пырăн. Пĕтĕм пурлăх сана валли.

– Маруҫ аппа, – тетĕп, – эсĕ мана ан ҫиллен, анчах шкул пĕтерсен эпĕ аслă шкула вĕренме каясшăн. Вĕрентекен пуласшăн. Аттепе анне пек.

Маруҫ аппа хаш! сывлать. Нимĕн те калаймасть. Пĕччен пурнăҫран хăтăлма май шырать. Эпĕ ăна лăплантарма тăрăшатăп:

– Маруҫ аппа, эпĕ сан пата ҫыру ҫырсах тăрăп, – тетĕп.

Маруҫ аппа шухăша каять, сăмах хушмасăр ҫуммăн утатпăр, иксĕмĕр те уйрăлу саманчĕ ҫывхарса килнине туятпăр.

Ун чухне Маруҫ аппана питĕ шеллесе ăсатса ятăм. Ҫапла ĕнтĕ – халĕ эпĕ ăна ăсатса яратăп... Ҫавăнтах Маруҫ аппа пире киле ăсатса яни куҫ умне тухать.

* * *

Ас тăватăп-ха...

Тӳрĕрех ҫул пултăр тесе Маруҫ аппа пахчи витĕр аслă сукмак патнелле ҫул тытрăмăр. Маруҫ аппа та пирĕнпе пĕрле пахчи хыҫне ҫитиех анчĕ. Пахчаран тухнă ҫĕрте пуҫне вĕрлĕк ҫине хучĕ те ача пек сасăпах йĕрсе ячĕ:

– Мĕншĕн сире йышăнтăмши? Йышпа пурăнма хăнăхрăм та халь пĕччен мĕнле пурăнас?..

Анне тем-тем каласа йăпатрĕ Маруҫ аппана. Эпĕ аннерен юлас мар тесе унăн кĕпе аркинчен ярса илтĕм. Аннепе ҫуммăн утатăп, каялла ҫаврăна-ҫаврăна пăхатăп. Маруҫ аппа ҫаплах ҫав вырăнтах, вĕрлĕкрен уртăнса, пуҫне ун ҫине хурса, пирĕн еннелле пăхса тăрать.

Ача чунĕпе ăна шеллетĕп – анне аркинчен алла вĕҫертместĕп. Анне аллинче пĕчĕк йăмăкăм. Эпир ҫырманалла анса куҫран ҫухаличчен те Маруҫ аппа вырăнтан хускалмарĕ.

* * *

Нумай-нумай ҫул иртрĕ. Маруҫ аппа тахҫанах пирĕнтен уйрăлса кайнă ĕнтĕ. Тăпри ҫăмăл пултăр.

Темшĕн Маруҫ аппа часчасах куҫ умне килет. Ăна ҫав ялан тăхăнса ҫӳрекен пиншакпах куратăп.

Хам та сисместĕп, Маруҫ аппана шеллесе унăн пурнăҫне ăсра урăхла ҫырма пуҫлатăп: мăшăрĕн вилнĕ хучĕ йăнăш килнĕ. Акă мăшăрĕ вăрçăран таврăннă. Вĕсем ачапăчаллă пулнă. Телей курса ватлăхне кĕтсе илнĕ...

Ăна пĕччен пурнăҫăн ытамĕнчен шухăшпа та пулин хăтарас тени-ши ку?..

Ҫак хайлав – иртнĕ вăхăт парни. Иртнĕ вăхăтăн та хăйĕн вăйĕ пур ҫав. Унран тем тусан та тарса каяймастăн...

# «ЛИК»: ҫĕнĕ номер




Ҫак кунсенче «ЛИК» /Литература. Искусство. Культура/ журналăн черетлĕ кăларăмĕ тухрĕ. Вулама юратакансем ку журнал паянхи литературăпа культура пурнăҫне тарăн ҫутатнине хăнăхнă. Ҫĕнĕ номер те чуна тивекен калавсемпе тата сăвăсемпе пуян.

Ҫавăн пекех шведсен паллă поэчĕ тата куҫаруҫи Микаэль Нюдаль Геннадий Айхин чăвашла ҫырнă сăввисене шведла куҫарни ҫинчен каласа пани, вăхăтсăр ҫĕре кĕнĕ Леонид Краснов журналиста унăн ашшĕ аса илни, Виталий Родинов литературовед тăван литература 1917-1922 ҫулсенче мĕнле аталаннине тĕпчени пур. Чăваш театрĕсен ҫĕнĕ спектаклĕсем ҫинчен – Арсений Тарасовăн «Мунча кунĕ» драми тата Иосиф Дмитриев режиссер лартнă «Чĕрĕ сăмах» ревю – Мария Митинăн материалĕнче вуласа пĕлме пулать. Александр Козлов писатель юлашки ҫулсенче ҫырнă повеҫсене Евгения Басова тишкерет. Виктор Рсайăн йывăр шăпине Юрий Яковлев аса илет. Атнер Хусанкай Чĕмпĕрте пурăнакан Виктор Аванмарт скульптор пултарулăхĕпе паллаштарать.

Вулакансене ҫакна та аса илтерес килет. Республикăри тĕп библиотекăсене редакци журнала маларах хăй вăйĕпе ҫитеретчĕ. Халĕ ун пек май ҫук. Ҫавăнпа ăна малашне библиотекăсен хăйсен ҫырăнмалла.

«ЛИКа» редакцире те сутаҫҫĕ. Хакĕ – 60 тенкĕ.

Пирĕн адрес: Шупашкар, И.Яковлев пр., 13, Пичет ҫурчĕ, 3-мĕш хут, 312-мĕш пӳлĕм.

ÇĂЛТĂР ÇУМĂРĔ

# Управçă пирĕштие шанакан Ирина Хакамада



● ÇАКĂН ПЕК АРÇЫН ÇУМĔНЧЕ ХĂВНА ЧĂН-ЧĂН ХĔРАРĂМ ПЕК ТУЯТĂН...

### Чуп туса йăлăхрăм

– 15 çулта чухне манăн питĕ сарă çÿçлĕ пулас килетчĕ. Азире çуралнă ытти хĕр пекех хама кăвак куçлă сарă пике пек кураттăм. Ĕмĕтĕме пурнăçа кĕртме анне пулăшрĕ. Вăл парнеленĕ парике тăхăнса урам тăрăх çÿреттĕм. Айван. Шăрăх. Пăчă... Тасти çухалчĕ вăл каярахпа...

Каярахпа çак эксперимента тепĕр хут туса пăхрăм. Варти пепке сакăр уйăхраччĕ ун чухне. Пысăк хырăмлă хĕрарăмсем валли кăларнă кĕске йĕм тăхăнтăм, сарă çÿçлĕ парик, темĕн пысăкăш майка – упăшкана кĕтсе илме Нью-Йорк аэропортне çакăн пек кайрăм. Çула май хам çума çулăхнă негртан аран хăпса пĕтрĕм. Аэропорт пĕчĕкçĕ кăна. Акă упăшка килет. Ман çине темĕнле йĕрĕнчĕклĕн пăхса илчĕ... "Володя..." – "Эсĕим ку?! Эпĕ мĕнле юхха ман çине куç илмесĕр пăхать тетĕп..."

15 çулта та, каярахпа та сарă парик мана хăюллăрах пулма пулăшмарĕ...

Чи малтанах мана вĕренÿре "пиллĕкпе" кăна ĕлкĕрсе пыракан арçын ача килĕштернĕччĕ. Вăл Ăсчахсен çуртне сăвăсем вуланине итлеме илсе çÿретчĕ, эпĕ унта çывăрсах каяттăм...

Иккĕмĕш "савни" чи пуçтах ачасенчен пĕриччĕ. Унран пурте хăраса тăратчĕç. Вăл мана урама шăхăрса чĕнсе кăларатчĕ. Унпа эпир урса кайса чуп тăваттăмăр. Икĕ уйăхран унпа та хутшăнма пăрахрăм – иксĕмĕрĕн калаçмалли сăмах та çукчĕ, чуп туса вара эпĕ йăлăхрăм...

### Хурçă пек çирĕп арçын

Эпĕ кампа хутшăнни аттене пачах та кăсăклантармастчĕ. Вăл вырăсла та пĕлместчĕ те манпа анне урлă калаçатчĕ. "Ира киле каçа юлса таврăнни мана килĕшмест", – пурте сĕтел хушшинче ларсан та çапла калатчĕ вăл, анне вара çак сăмахсене ман пата çитеретчĕ. Анне шкулта акăлчан чĕлхи вĕрентетчĕ. Пĕррехинче унран патшалăх телерадиокомпанийĕн Хабаровскри уйрăмĕнче ĕçлекен Муцумо Хакамада пулăшу ыйтнă – арçын вырăсла вĕренме шухăш тытнă-мĕн. Атте аннерен 10 çул аслă пулнă, коммунист, 1939 çулта Японирен куçса килнĕ. Кĕçех аннене качча илнĕ вăл. 1953 çулта аттене Мускава куçарнă. Тепĕр икĕ çултан эпĕ çуралнă. Атте революци идейисене чунран парăннă çын пулнă, ĕçмен, туртман – хурçă пек çирĕп арçын. Атте манпа кăсăкланманнин ырă енĕсем те пурчĕ – вăл чăн-чăн яппунчĕ: "Ачана воспитани мар, ирĕклĕх памалла, ним тума та чармалла мар..." Вăл пĕçерне апата чунран юратса çиеттĕм. Анчах коммуналкăри пĕтĕм кÿршĕ вăл кухньăра аппаланнă чух алăкĕсене çăтă хупатчĕç те атте çине курайман сăр пăхатчĕç. Мана сĕтел хушшине вăл нихăçан та чĕнместчĕ. Писнĕ апат шăршине туйсан хамах кухньăна каяттăм, ун çумне ларса пĕр чĕнмесĕр çиеттĕмĕр. Анне иксĕмĕр çине те усаллăн пăхатчĕ – тухăç кухнине чăтма пултараймастчĕ вăл.

Аттепе анне вĕçĕмсĕр харкашатчĕç. Атте аннене хĕнетчĕ. Пĕррехинче вĕсен хушшине сиксе кĕрсе тăтăм та кăшкăртăм: "Ан хăйнă пултăр!" Тĕлĕнмелле те, атте итлерĕ. Тепрехинче çапах та чарăнаймарĕ, мĕнле пачĕ мана хăлха чиккинчен! Пÿлĕм кĕтессине вăркăнса кăна кайрăм. Сиксе тăтăм та çемçе вырăнтан пуçпа пырса мĕнле чышрăм аттене! Вăл авăнса анчĕ, аннене чĕнчĕ: "Çапăçать!" "Сан ачу ку – хăвăн пекех", – хак пачĕ лару-тăрăва анне тÿрех.

Анне нумай ĕçлетчĕ, атте те. Анчах та вăл хватершĕн тÿлеме те укса памастчĕ. Хăй вара ресторансенче апатланатчĕ, "Волга" машинипе юлташĕсемпе таçта çÿретчĕ, теннисла вылятчĕ... Атте ушканне аннене кĕртмен. Ресторанра та пĕрре те пулман вăл... Юратăвĕ çапла хăвăрт вĕçленнĕ-ши вĕсен – пĕлместĕп.

Мана анне питĕ юрататчĕ, шел, вăхăчĕ пачах та çукчĕ унăн. Эпĕ кирек мĕн тусан та яланах ман майлă пулса тÿрре кăларатчĕ.

Аслă классенче эпĕ уроксене тăтăш сиктереттĕм. Аннене çакна йăлтах каласа паратчĕç. Вăл шкула каятчĕ те темĕн те пĕр шухăшласа кăларатчĕ – чирленĕ, похода кайнă...

### Хăвăртрах... качча тухмалла

Шкул хыççăн ăçта вĕренме кĕрессине хамах татса патăм. Кам пулассине те пĕлместĕмха. Алгебрăна тата литературăна килĕштернине кура экономист çулне суйларăм. Университетра арçынсен коллективне лекнипе депресси пуçланчĕ. Çăлăнăçа упăшкара кураттăм. Апла хăвăртрах качча тухмалла. Мана пĕр каччă килĕштеретчĕ, анчах хăй нумаях пулмасть кăна хăмăт тăхăнсран хăтăлса юлнине тÿрех кăларĕ вăл – апла тăк авланма шухăшламасть те. Маншăн паспортри штамп ниме те пĕлтерместчĕ: упăшка çынпа хутшăнма кăна вĕренттĕр. Валера шанăçа тÿрре кăларчĕ. Çулталăкран вара хăех пĕрлешме сĕнчĕ. Аттене манăн пулас упăшка килĕшмерĕ-ха, анчах та унăн шухăшĕ маншăн пĕлтерĕшлĕ марччĕ. "Яр" ресторанра чаплă туй кĕрлеттертĕмĕр. Ĕнтĕ çемьеллĕ пурнăç пуçланчĕ.

### Диплом ĕçĕ – вырăн çинче

Манăн стипенди 57 тенкĕ /вĕренÿре ĕлкĕрсе пынăшăн хушса тÿлетчĕç/, унăн – 45. Çемье пĕтĕм бюджечĕ. Эпĕ вара питĕ начар тумланаттăм. Качча тухнă чух 70 килограммччĕ, кайран хăвăрт начарланса 56-а çитрĕм. Сĕтелпуканран та пуян марччĕ эпир, пÿлĕм варринче тăлăххăн раскладушка кăна тăратчĕ...

Данила çуралнă тĕле кăштах уралнма ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ. Шăп диплом хÿтĕлес умĕн çие юлчĕ манăн. Çĕнĕ çул умĕн юн кайма пуçларĕ. Ун чухне хĕрсем хырăм юлнине ÿкерес тесе ятарласа эмел ĕçетчĕç. Мана та çакăншăн айăплама пăхрĕç. Унтан эпĕ чăнласах пăшăрханнине кура тухтăр ĕненчĕ. Тăхăр уйăх асаплантăм – хырăм хăть те хăш самантра ÿкме пултаратчĕ. Вырăн çинчен тăрса та курман темелле. Шăп çак самантра аспирантурăна чĕнчĕç. Упăшкан ман умĕн те савни пулнăха, вăл Ленин ячĕллĕ библиотекăра ĕçлетчĕ. Мăшăра унпа çыхăнма хушрăм – диплом çырмашкăн литературăпа тивĕçтертĕр мана. Вырăн çинчен тăмасăр чаплă диплом ĕçĕ хатĕрлерĕм. Аспирантурăна кĕме тăнă çĕре шăпах çуратма вăхăтчĕ. Аудиторири халăх ман çине чалăшшăн пăхать – патне çитнĕ, эпĕ вара КПСС историйĕпе экзамен тытатăп! Хĕрлĕ диплом пулнине те пăхса тăмарĕ преподаватель, ыйтусемпе чыхлантарчĕ. КПСС пĕтĕм съезчĕ хăш çулсенче пулнине ыйтрĕ. Эпĕ вара цифра тĕнчипе нихăçан та туслă пулман! Аудитори сывлама чарăнчĕ. Эпĕ сивĕ тарпа витĕнтĕм. Пĕр пиллĕкĕшне аса илтĕм-ха, çак вăхăтра ача мĕнле тапкалашма пуçларĕ! Хырăм "ташланине" преподаватель те асăрхарĕ. "Каях..." – алă сулчĕ хайхи. Çапла вĕренме кĕтĕм эпĕ аспирантурăна.

### Пĕрререн – тăваттă таран...

Çулла Данила çут тĕнчене килчĕ. Вăл вăхăта анне тивĕçлĕ канăва тухнăччĕ те ача пăхма пулăшрĕ. Тĕрĕссипе, пурнăçне вăл Данилăна халаллăрĕ. Халĕ ывăлăм МПУран вĕренсе тухрĕ, МГИМО магистратуринче ăс пухрĕ. Авланчĕ, ачисем пур...

Ун чухне вара... Ун чухне çăмăл марччĕ-ха. Ача ÿссе пырать, апат нисхта та çук – лавккасенче çÿлĕксем пушпушă. Сахал мар асапланнă.

Даня виççĕ тултарсан упăшкапа уйрăлтăмăр. Вăл макăрать, манăн куççуль юхать... Анчах пирĕн истори вĕçленнĕччĕ ĕнтĕ... Эпĕ вăл вăхăта пулас иккĕмĕш упăшкана тĕл пулнăччĕ, пуçа çухатасла юратса пăрахнăччĕ. Эпĕ питĕ хăвăрт килĕштеретĕп çынна. Иккĕмĕшĕнчен виççĕмĕш патне кусрăм – каллех юратăва пула. Унран уйрăлса виççĕмĕшпе пĕрлешрĕм, кайран – тăваттăмĕшпе. Чăн та, ку юлашки пулĕ тетĕп-ха...

### Кĕмĕл чей кашăкĕ

Володьăпа тĕл пулнă чух эпĕ 42-реччĕ. Йăлтах питĕ хăвăрт пулса иртрĕ. Манăн çие юлчĕ. Çавна пула арканчĕ виççĕмĕш çемье. Сăмах май, виççĕмĕш упăшка хваттер туянса панăччĕ, евроюсав турăмăр. Çуркунне пулчĕ ку. Çурла уйăхĕнче вара эпĕ тухса кайрăм. Хампа пĕрле ачалăхран юлнă кĕмĕл чей кашăкне кăна илтĕм – эпĕ унран ниçта та уйрăлмастăп. Володя та чаплă хваттерне мăшăрне парса хăварчĕ.

Эпир аэропорт çумĕнче пĕчĕк хваттер тара илтĕмĕр. Ман çумра – кĕмĕл кашăк. Хам ача кĕтетĕп. Володьăн партнерĕ çаратрĕ. Укса пачах çук. Çапла пуçланчĕ пирĕн çĕнĕ пурнăç...

Çие юлни тăватă уйăх çитсен Америкăна кайма шухăшларăмăр. Раççейре вăл вăхăтра хăрушă вăхăтчĕ. Унта вара лăпкă. Унсăр пуçне пирĕн ыттисенчен урăхларах ача çураласси пĕлнĕ эпир – "сарă прессăра" хамăр çинчен шăв-шав çуратас килмерĕ.

Америкăра мана тухтăрсем турткаламарĕç – эрнере пĕрре больницăна пырса курăнмалла çеç. Манăн питĕ вырăс апатне çиес килетчĕ çав тапхăрта. Катлет, пельмень, хуран кукли тăваттăм, баклажан вăлчи туянса çăкăр çине сĕрсе çиеттĕм. Çапла 20 килограмм хушрăм та. Упăшка та манран юлмарĕ. Каярахпа пĕрле начарлантăмăр. Тăхăр уйăхри хырăмпа эпĕ гольф выляттăм, бассейнра ишеттĕм.

### Пушăлăхри министр

Маша 3 уйăх тултарсан Мускавран шăнкăравларĕç, социаллă хÿтлĕх министрĕн пуканне сĕнчĕç. Килĕшрĕм. Пушăлăха таврăнтăмăр. Хваттер çук. Пансионатра пурăнтăмăр. Мана дача парчĕç. Кайран, отставкăна ярсан, каллех пансионата таврăнма тиврĕ...

Халĕ мана: "Санăн мĕнле чаплă хваттер!" – теççĕ. Эпĕ ăна 50 çулта тата мĕн тери йывăрлăхпа туса пĕтернине кам та пулин тĕшмĕртет-ши?

Эпир унта мĕн тери хавхаланса юсав ĕçĕсем ирттертĕмĕр. Çав вăхăтра Маша чирлесе ÿкрĕ. Шăннипе температура ÿссе кайрĕ – 40 таран. Унтан иртсе кайрĕ пек. Садике ярсан каллех çĕнĕрен пуçланчĕ. Унăн шăммисем ыратма пуçларĕç. Упăшка ачана ыталаса çывăрма пуçларĕ. Маша кăшт кăтăш пулать те çийĕнчех вăранать. Паян та асрах... Телефон шăнкăртатрĕ, упăшка тытрĕ. Пирĕн патра юлташсем пурччĕ. Лини тепĕр вĕçĕнче мĕн каланине упăшка мана юриех ыттисен умĕнчех пĕлтерчĕ: Машăн – рак...

### Пĕчĕк самурай

Ачапа больницăра ытларах Володя пулчĕ. Эпĕ çĕр-шыв президенчĕ пулма кандидатурăна тăратнă, суйлав кампанийĕ пырать. Маша чирĕ пирĕн çемье хутшăнăвĕсене çирĕплетрĕ кăна. Володя мана нихăçан та ÿпкелешмен. Пачах тепĕр май, хавхалантарса кăна пыратчĕ.

Маша кăшт самайлансанах хăра-хăрах ăна таçта та илсе тухаттăмăр. Кирек ăçта çитсен те чи малтан клиника шыраса тупаттăмăр – юна кашни эрнерех тĕрĕслесе тăмаллаччĕ. Сехетсерен эмел памаллаччĕ. Маша аквапарксене питĕ юрататчĕ. Пĕррехинче эпĕ те ярăнса пăхрăм – пĕр эрне ăш пăтранчĕ! Маша вара вилсе каятчĕ вĕсемшĕн. Ачалăхран больница мар, çакă асра юлтăр тесе тăрăшаттăмăр Володьăпа.

Маша, сăмах май, йăлтах шăппăн чăтатчĕ. Уйăхра пĕрре унăн çурăм шăмминче чакаланатчĕç. Йăлт чăтатчĕ. Гормонсене пула шыçса кайрĕ, çÿçĕ тăкăнса пĕтрĕ. "Пирĕн ахаль ача мар – Будда", – шÿтлеттĕмĕр эпир.

Черетлĕ хут больницăран таврăнсан хими терапине тата çур çула тăснине пĕлтĕм. "Хăçан вĕçленет ку?" – чăтаймасăр йынăшса ятăм эпĕ. "Анне, ан пăшăрхан, нумай юлмарĕ ĕнтĕ", – тет ман хĕр пĕрчи. "Хăçан?" – "Кĕçех". Эпĕ темшĕн ĕнентĕм çак сăмахсене. Çапла пулса тухрĕ те...

Ун чухне унран ыйтсах тăраттăм: "Хăвна мĕнле туятăн?" "Питĕ лайăх. Ан кулян". Пĕчĕк самурай. Пĕррехинче кĕтмен çĕртен каласа хучĕ: "Ахăртнех, тÿпене хăпарма вăхăт..." Манăн чăтăм кÿлли тулса тăкăнса кайрĕ, эпĕ ухмаха тухасла макăрма пуçларăм. Володя мана аран-аран тăна кĕртрĕ. Унтан ачаран ыйтрĕ: "Мĕн пирки эсĕ?" Маша вара самолет пирки каланă иккен...

Çакна калас килет. Пурнăç тĕрĕслевне чăтса иртерме пĕлмелле. Ĕçлеме пăрахмалла мар çак вăхăтра. Пулăшакан тытса укçа тÿлĕр те – ан пăрахăр. Сирĕн чунра пурăнас хăват юлмасан ачана нимĕнпе те пулăшаймăр.

Халĕ Маша ÿнер шкулĕнче вĕренет. Питĕ лайăх ишет, ăмăртусенче çĕнтерет, театр студине çÿрет, акăлчанла вĕренет.

Раççей – варварсен çĕршывĕ. Маша пек ачасем валли кунта нимĕнле условисем те çук. Пĕчĕк чух пулăшаççĕ-ха, ÿссе çитсен вара эсĕ никама та кирлĕ мар. Ăçта çăлăнăç? Ăна тупаймасан каллех тухса кайма тивет. Анчах та çав çула тупасса шанатăп. Мĕншĕн тесессĕн эпĕ тăван çĕр-шывсăр пурăнаймастăп. Управçă пирĕшти пурах, вăл пулăшатех, эпĕ çакна шансах тăратăп...

/«Караван историй»/.



## ☺ И-ХИ-ХИК ☺

Ирхине. Автобуса çамрăк кĕрет те кондуктор енне 1000 тенкĕлĕххине тăсать. Çапла майпа нумайăшĕ укçа перекетлеме вĕренсе çитнĕ – ирхине кондукторăн тавăрса памашкăн вак укçа çук-çке. Анчах хальхинче урăхларах пулса тухнă. Çамрăк кондуктор енне укçине тăсать те хĕрарăма куçран шанчăкпа пăхать. "Мĕн мăшкăлласа тăратăн, мĕн тавăрса парас манăн сана?!" – теессе кĕтет ĕнтĕ. Анчах та лешĕ хăй енне тăснă укçана лăпкăн кăна илет те сумкине уçать, унтан пиртен çĕленĕ пысăк хутаç – пуç пысăкăш – туртса кăларать:

– Ме, ывăлăм, 10 пуслăххисене ятарласа пĕр эрне пухрăм. Шутласа пăхатăн-и? – тет.

Автобусра нумайччен ахăлтатса кулни илтĕнсе тăрать...

***

Автобуса тĕрĕслекен кĕрет.

– Сирĕн билет пур-и?

– Паллах, пур. Тархасшăн.

– Каçарăр та, кунта кăрлач уйăхĕ тесе паллă тунă.

– Э-э-э... Эпĕ тахçантанпах ярăнатăп çав...

***

– Эпĕ хура çырлапа пĕçернĕ кукăль çиме юрататăп. Çавăнпа та куçăм та лайăх курать – 100 процент.

– Эпĕ вара кăмпапа килĕштеретĕп. Куçăм та çавăнпах питĕ çивĕч – 150 процент.

– Мĕнле вара ку?

– Мĕнле-мĕнле... Çуккине те куратăп – авă мĕнле!

***

Кимĕсем тара паракан вырăнта çăлавçă кăшкăрать:

– 99-мĕш кимĕ! Çыран еннелле çаврăнăр! Сирĕн вăхăт вĕçленчĕ! 99-мĕш кимĕ! Çыран еннелле çаврăнăр тетĕп! Сирĕн вăхăт вĕçленчĕ!

Ун патне тепри пырать:

– Мĕн кăшкăратăн эсĕ? Пирĕн кимĕ те 70 кăна вĕт, – тет.

Хайхи çăлавçă пĕр вăхăт шухăша каять те каллех кăшкăрать:

– 66-мĕш кимĕ! Сирĕн тем инкек пулчĕ-им?

***

Пĕчĕк ача пĕр печени çисе яриччен унăн амăшĕн çăвăнса, тăхăнса, апат çисе, савăт-сапа çуса ĕлкĕрмелле. Эсир вара "çар" тетĕр... Декрет – акă мĕн çынна хăвăртлăха хăнăхтарать!

***

– Анне, эпĕ уçăлма тухам-ха...

– Кампа? Ăçта каятăн? Мĕнпе каятăн? Миçере таврăнатăн?

– Атте, уçăлма тухам-ха...

– Юрать...

***

Ирхине арăма чейнике газ плити çине лартмашкăн ыйтрăм. Шыв вĕреме кĕнĕ хушăра шăл тасатрăм. Çак вăхăтра арăмпа иксĕмĕрĕн хутшăнури çĕнĕлĕхсене "пĕлтĕм". Вăл маншăн чура имĕш, эпĕ ăна нимĕн вырăнне те хумастăп, унра хĕрарăма хаклама пăрахнă, апла тăк мĕн туса пурăнмалла пĕрле, уйрăлмалла, мĕншĕн тесессĕн эпĕ тахçанах урăххине тупнă... Вăт чей ĕçрĕм тĕк ĕçрĕм...

***

Ветеринар практикант студента шултра выльăхăн вар-хырăмне çемçетмелли эмел пама вĕрентет.

– Кĕпçе илетĕн те ун пĕр вĕçне эмел хуратăн, выльăх çăварне чиксе кĕпçе витĕр вĕретĕн. Ăнлантăн-и?

Тепĕр кун стажер ĕçе икĕ сехет каярах юлса çитет. Хăй кăвакарсах кайнă.

– Мĕн пулчĕ? – ыйтать асли.

– Эсир вĕрентнĕ меслетпе усă курса лашана эмел парам-ха терĕм те...

– Вара?

– Вара, вара... Лаша малтан вĕрсе ĕлкĕрчĕ...

***

Автобуса ÿсĕр кĕрет. Билет туянма укça çуккине калать.

– Эрех валли тупнă-çке... – яланхи сăмах хĕрарăмсен.

– Юлташ хăналарĕ.

– Çул çине вара мĕншĕн памарĕ?

– Мĕншĕн – памарĕ? Пачĕ, акă, – куртка çанни ăшĕнчен çур литр туртса кăларать арçын.

***

Арçынсем мăкăрлантарнă май калаçаççĕ.

– Манăн юлташ психолог, – каласа кăтартать пĕри. – Вăл мана çапла вĕрентет: "Арăму мĕнле калать – çапла ту: йăнăш пулсан хăех айăплă-çке капла, санпа вăрçăнса тинкĕне кăлармĕ".

– Э-э, санăн психологу хăшпĕр саманта шута илмест, – тĕрлетеççĕ тĕрех ытти арçынсем. – "Пур пĕрех эсĕ айăплă", "Хăвăн та шухăшламалла пулнă", "Эсĕ мана ăнланман" йышши сăмах çаврăнăшĕсене хальлĕхе никам та пăрахăçламан-ха.

***

Чебурашка Гена патне шăнкăравлать:

– Гена, пире вунă апельсин ярса панă: мана саккăр, сана саккăр.

– Тăхта-ха, саккăр çумне саккăр вуннă пулмасть вĕт-ха?

– Нимĕн те пĕлместĕп, эпĕ хамăн саккăрăшне çисе ятăм ĕнтĕ.

***

Журналист миллиардертан интервью илет:

– Мĕнле майпа пуйса кайма пултартăр-ха эсир?

– Нимĕн кăткăсси те çук кунта. Укçа хăй кăна – хут купи кăна. Тĕп вырăнта – ĕç.

– Сире çак шухăш ура çине тăма пулăшрĕ-и?

– Çук. Эпĕ çакна хам патра ĕçлекенсене ĕнентерме пултартăм.

***

Каç пулса килет.

– Ну, ăшăнмалла пĕрер черкке пушатар-и?

– Мĕн ăшăнмалли? Çулла вĕт.

– Çулла та организм тул енчен кăна ăшăнса çитет, шал енчен пур пĕр шăнать.

***

– Иван, санăн чей ĕçес килет-и?

– Ĕçес килет.

– Апла тăк диван çинчен тăр та вĕрет.

– Э-э-э... Ĕçес килмест.

– Мĕн суйса выртатăн апла тăк?



## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРÿСЕМ

### П Р О Д А Ю

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т.8-960-301-63-74.

**7.Срубы** для бани. Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**9.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, кирп. бой. Т. 89033583021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**20.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 89625989686.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ, косилки, сажалки, копалки,** окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**33.Гравмассу, песок, керамзит, щебень,** торф. Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 89373866629.**

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозем, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 48-92-77.

**52.Пластиковые ОКНА,** железные **ДВЕРИ.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60.СЕМЕНА** высокоурожайных **томатов, огурцов, перцев** и др. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

### П Р О Д А Ю

**117.ОКНА Чувашии.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

**134.Кирпич, кольца, ФБС блоки.** Д-ка манипулятором. Т. 44-73-53.

**144.Кирпич, керамблок, кольца.** Дёшево. Д-ка. Т. 213680.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**158.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 89276689303.

**172.Гравмассу, керамблок, песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**178.Цемент, гравмассу, песок.** Д-ка. Т.: 8-927-849-76-75, 89278497674.

**193.ПЧЕЛОСЕМЬИ.** Т. 89613429059.

### УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.

**99.Видеонаблюдение,** автоматические **ворота.** Т. 89278636398.

**115.Наркология. Трезвая жизнь.** Т. 8-902-663-20-80. Лиц. 5001001230 от 8.06.2007г. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

### КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**104.Бычков, коров, тёлок, овец,** свиноматок. Т. 8-937-014-49-97.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

### РАБОТА

**100.Требуются монолитчики.** Т. 8-937-952-58-67.

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.



## ПАХЧАРА

# Йывăççене кайăксенчен сыхлама

Садри йывăççене кайăксенчен сыхлас тĕллевпе магнитофонăн кивĕ лентипе е чăрăша капăрлатмалли «çумăрпа» чĕркетĕп. Вĕсен тăршшĕне çилпе вĕлкĕшмелле касатăп. Юрăхсăра тухнă СД диск та хута каять, вĕсене туратсем çине çиппе çакса ямалла. Кайăк-кĕшĕк йăлтăртатакан тата чăштăртатакан япаларан хăрать.

Çавăн пекех ачасемпе пĕрле катемпи ăсталама пулать. Вăл дачăна е пахчана илем те кÿрĕ. Ăна валли икĕ патак, кивĕ тумтир, улăм, витре кирлĕ. Пуçне – кавăнран, куçне хĕвел çаврăнăш чечекĕнчен е майонез банкинчен тума юрать. Катемпие фосфорпа сăрласан вăл çĕрле те çутатса тăрĕ.

### 9-мĕш номерте пичетленнĕ сăмах каçмăш хуравĕсем

**СЫЛТĂМАЛЛА: 4. Комикла. 7. Код. 8. Ода. 9. Çук. 10. Ара. 11. Свинарь. 15. Алчăрав. 18. Таз. 19. Ола. 20. Лав. 21. Лар. 22. Утесова.**

**АЯЛАЛЛА. 1. Мордюкова. 2. Пи. 3. Клеопатра. 5. Акаçă. 6. Парад. 12. Нуккă. 13. Елизавета. 14. Самойлова. 16. Утиль. 17. Шатра. 23. Си.**


« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИПЕ МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор– тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службисем 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.



**РЕДАКЦИ АДРЕСĔ:** 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, 6 хут, "Чăваш хĕрарăмĕ"
**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:** 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

**Факс:** /8352/ 28-83-70
**Электрон почти:** hypar@chtts.ru



Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 21 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 9204. Заказ 1111.